24-мĕш çул тухать. Хаке 10 пус.

1941
АВГУСТ
24
ВЫРСАРНИКУН
199 (5914) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ХАЛЬХИ ВĂХĂТРИ ПАРТИЛЛĔ-ОРГАНИЗАЦИЛЛĔ ĔÇ ÇИНЧЕН

СССР Оборона Халăх Комиссарĕ аслă Сталин юлташ ертсе пынипе, Хĕрлĕ Çар тата Тинĕс-Çар Флочĕн паттăр боецĕсемпе командирĕсем тата политработникĕсем юнлă фашистсене хирĕç хăватлăн çапăçаççĕ. Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар Германи çарĕн чи лайăх дивизийĕсене çĕмĕрсе тăкрĕ, унăн авиацине тата танкăсене сахал мар çĕмĕрчĕ. Совет Союзĕн кашни хулишĕн тата ялĕшĕн пыракан çапăçусенче Германи фашисчĕсем çĕршер, пиншер тата вуншар пин хăйсен пуçĕсене хураççĕ.

Анчах та пирĕн тăван çĕршыв умĕнчи пысăк хăрушлăх сирĕлмен. Тăшман усал та тискер тата чее. Вăл хăйĕн юнлă планне пурнăçа кĕртме хăтланса пирĕн çĕршыва хирĕç мĕнпур вăйне хурать. Ку вăл пирĕн социализмлă тăван çĕршывăн кашни гражданинне хамăрăн Хĕрлĕ Çара пулăшассине вăйлетма, çĕршывăн оборона хăватне тĕреклетме пĕтĕм вăя пама хушать.

Мĕнпур организацисен, чи малтан парти организацисен хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăчĕ хушнă пек хăвăрт çĕнетсе урăхлатмалла. Парти организацисен хăйсен пĕтĕм ĕçне Сталин юлташ кăçалхи çулăн июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă сăмахра кăларса тăратнă задачисене пурнăçлассине пăхăнтармалла, хамăрăн ĕçсене йăлтах вăрçă вăхăчĕ хушнă пек туса пымалла, гитлерла Германие çĕмĕрсе тăкма мĕнпур халăха мобилизацилемелле.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче партиллĕ-организацилле тата партиллĕ-политикăллă ĕçĕн хăйĕн уйрăмлăхĕ пур. Халĕ парти организацисен ĕççыннисене пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме, Хĕрлĕ Çара пулăшма, тыла çирĕплетме мобилизацилес лозунгпа ĕçлесе пымалла.

Фашистла бандитсене хирĕç пыракан кĕрешӳн фронтĕнче те, тылра та коммунистсем малти ретре пыраççĕ. Коммунистсем тăшмана çĕмĕрсе пĕтерсе тăкма массăсене мобилизацилесе ертсе пыраççĕ.

Вăрçă условийĕсенче парти организацийĕсен хăйсен ĕçĕнче централизм принципне çирĕплĕн пурнăçламалла, ĕçре питĕ оперативлă пулмалла. Мирлĕ вăхăтри ĕç меточĕсем халĕ юрăхсăр ĕнтĕ. Пысăк плансем, нумай çынлă ларусем, темиçе страница çырнă резолюцисем паянхи кун юрăхлă мар.

Кашни парторганизаци, унăн ертсе пыракан органĕ—партине правительство заданийĕсене пĕр сăмахсăр пурнăçа кĕртекен штаб пулса тăмалла. Халĕ ĕнтĕ парторганизацисем паракан кăтартусемпе директивăсем те кĕске, оперативлă пулмалла, вĕсене пĕр сăмахсăр пурнăçламалла.

Вăрçă вăхăтĕнче парти райкомĕсен кадрсен отделĕсен уйрăмах вăйлă ĕçлемелле. Вĕсен коммунистсене Хĕрлĕ Çарта ĕçлеме мобилизацилес, фронта кайнă работниксем вырăнне çынсем тупса лартас, кадрсене, уйрăмăнах хĕрарăмсене, ертсе пырас ĕçе лартас тĕлĕшпе ĕçлемелле.

Оргинструкторски отделсен те нумай ĕçлемелле. Вĕсен кашни пуçламăш парторганизаци тата кашни коммунист партине правительство решенийĕсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслемелле, вĕсене пурнăçа кĕртме парти организацисене оперативлă пулăшмалла. Пропагандăпа агитаци отделĕсем массăллă агитаци ĕçне нихăçанхинчен те вăйлăн туса пымалла. Дисциплина, хурçă пек çирĕп дисциплина кашни парторганизацин ĕçĕнче тĕп вырăнта пулмалла.

Сăмах та çук, партин нумай райкомĕсем, пуçламăш организацисем хăйсен ĕçне лайăхлатрĕç. Çапла, ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕ пуçламăш парторганизацисене куллен тата оперативлă ертсе пырать. Парти райкомĕн инструкторĕсем кăна мар, ытти ответлă работниксем те пуçламăш парторганизацисенче, колхозсенче тата предприятисенче час-часах пулаççĕ. Вĕсем унта хальхи вăхăтри ĕçсем çинчен докладсем туса параççĕ. Парти райкомĕ фронта кайнă юлташсем вырăнне çынсем тупса лартма кадрсен резервине тăвас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тăвать. Политикăллă агитаци ĕçне те вăрçă вăхăчĕ хушнă пек туса пыраçĕ. Партиллĕ ĕçе çĕнетсе урăхлатни промышленноçлă предприятисен ĕçĕ лайăхланнинчен курăнать. Древкомбинат, «Большевик» завод тата ытти предприятисем производствăллă программăна ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ.

ВКП(б) Канаш, Çĕрпӳ, Елчĕк райкомĕсем те партиллĕ ĕçе вăрçă вăхăчĕ хушнă пек туса пырса, пуçламăш парторганизацисен, колхозсен, предприятисен ĕçне нумай лайăхлатма пултарчĕç.

Чкаловски районĕнчи «Маяк» колхозри пуçламăш парторганизаци хăйĕн ĕçне вăрçă вăхăчĕ хушнă пек туса пырать. Коммунистсем ертсе пынипе колхозниксем тырпула уйхиртен пустарса кĕртме пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе тухнă. Колхозниксем пурте уйхир ĕçне хутшăннă, вĕсем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ Производствăра коммунистсем малти ретре пыраççĕ. Коммунист Сыраев юлташ ертсе пыракан 4-мĕш бригада кĕркри тырăсене вырса пĕтернĕ. Коммунистсем социализмлă тăван çĕршыв оборонин фондне тăвас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Пуçламăш парторганизаци секретарĕ Сыразетдинов юлташ оборона фондне пĕр сурăх, 1500 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем панă.

Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци те вăрçă вăхăчĕ хушнă пек ĕçлет. Пуçламăш парторганизацинчи коммунистсем колхоз производствинче стахановла ĕçлесе ытти колхозниксене пример кăтартаççĕ. Колхозра уйхир ĕçне тухман пĕр колхозник та çук, ватти-сем те, çамрăккисем те тырă выраççĕ. Пуçламăш парторганизаци колхозниксене ПВХО ĕçне вĕрентессине лайăх йĕркеленĕ. Коммунистсем политикăллă агитаци ĕçне колхозниксене вăрçă ĕçне вĕрентессипе çыхăнтарса туса пыраççĕ.

Çĕрпӳри зоотехнически станцинчи пуçламăш парторганизаци массăллă оборона ĕçне лайăх туса пырать. Кунта трактористсен курсĕ ĕçлет, сотрудниксем çар ĕçне тăрăшса вĕренеççĕ. Самозащита групписем практикăллă занятисене йĕркеллĕ туса ирттереççĕ. Санитари ĕçне вĕренмелли курс та лайăх ĕçлет. Массăллă оборона ĕçне пуçламăш парторганизаци хăй ертсе пырать.

Коммунистсем примерлă пулса массăсене хăйсем хыççăн илсе пыраççĕ. Канаш станцинчи коммунистсем Белоусов, Журкин, Гуськов тата ытти юлташсем ĕçре паттăрлăх кăтартаççĕ. Вĕсем васкавлă ĕçсене тунă чухне кунне 14—15 сехет ĕçлесе, ответлă заказсене хăвăрт тăваççĕ. Çĕмĕрле комбинатĕнче производствăра ĕçлекен коммунистсем пурте нормăсене ирттерсе тултараççĕ. Коммунистсем çĕнĕ рабочисене вĕсен ĕç квалификацине ӳстерме пулăшаççĕ. Коммунистсем оборона фондне тăвас, хаклă япаласем парас, тимĕр-тăмăр пухас тата воскресниксем тăвас ĕçĕн организаторĕсем пулса тăчĕç.

ВКП(б) райкомĕсем партиллĕ-политикăллă ĕçе вăрçă вăхăчĕ хушнă пек урăхлатса çĕнетме май паракан организацийĕсене чылай туса ирттерчĕç. Агитаторсен тата агитколлективсен руководителĕсен йышне пăхса тухрĕç. Коммунистсене хальхи вăхăт хушнă пек партиллĕ поручениесем параççĕ. Парти активĕ агитацийĕ-массăллă тата организацийĕ ĕçсене куллен хутшăнса пырать. Обществăллă организацисене, уйрăмăнах Осоавиахим организацисене ертсе пыраççĕ.

Фашистла вăрă-хурахсене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçă парти организацийĕсем умне уйрăмах пысăк та ответлă задачăсем кăларса тăратрĕ. Пирĕн тылри хуçалăхлă ĕçсене оборона нушисене пăхăнтарса туса пырасси кашни парторганизацин хисеплĕ задачи пулать. Хĕрлĕ Çара пополнени парса тăрасси, сывлăшран килсе тапăнассинчен сыхланма халăха вĕрентесси, агитаци ĕçне анлăн туса пырасси, тылри дезорганизаторсене хирĕç кĕрешесси, промышленность, транспорт предприятийĕсене лайăх ĕçлеттересси, ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх туса, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарасси—кашни парторганизацишĕн, кашни коммунистшăн хисеплĕ ĕç. Çак ĕçсене тунă чухне парти работникĕсен, коммунистсен ытти мĕнпур работниксене пример кăтартса, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр ĕçлесе пымалла.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

А. И. Измайлов юлташа Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕн обязанноçĕсене туса пыраканĕ пулма çирĕплетесси çинчен

Чăваш АССР Верховный Совечĕн депутатне Александр Измайлович **Измайлова** Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕн обязанноçĕсене туса пыраканĕ пулма çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕшĕн —
Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Председателĕн Наместителĕ А. КРАСНОВ

Шупашкар хули. 1941 çулти августăн 23-мĕш.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Августăн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ)

Августăн 22-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç вăйлă çапăçусем туса пынă.

Тĕплĕн палăртнă тăрăх, августăн 20-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсенне малтан кăтартнă пек 21 самолет мар, 32 самолет персе ӳкернĕ.

Балти тинĕсĕнче совет карапĕсем нимĕçсен охраненипе пынă 5 транспортне атакăланă. Пулса иртнĕ çапăçура противникăн икĕ транспортне тата охранăри икĕ катерне путарнă, виçĕ транспорчĕ çыран хĕррине тухса ӳкнĕ.

* * *

ГИТЛЕРЛА ГЕРМАНИПЕ СОВЕТ СОЮЗĔ ХУШШИНЧИ ВĂРÇĂН ИКĔ УЙĂХРИ ИТОГĔСЕМ

Пирĕн тăван çĕршыва ултавлăн кĕрсе кайнă гитлерла кĕтӳсене хирĕç Хĕрлĕ Çар туса пынă вăрçă ĕçĕсен икĕ уйăхĕ çакна кăтартса параççĕ: Германи çарĕн командованийĕ Хĕрлĕ Çара «çичĕм пек хăвăрт пĕтерсе тăкма» шутласа тунă мухтанчăк плансем арканса кайрĕç.

Пĕр уйăх каярах ĕнтĕ Германи командованийĕ Мускава, Ленинграда тата Киева пымалли çулсем ӳсе, тесе пĕтĕм тĕнчене пĕлтерчĕ. Анчах та пирĕн войскăсем çав çулсене хупрĕç тата çак иртнĕ вăхăт хушшинче Германин вуншар дивизийĕсене пĕтерсе тăкрĕç.

Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех ĕнтĕ Германи пропаганди пĕтĕм совет авиацине пĕтерсе тăкнă тесе пĕлтерчĕ. Анчах пирĕн летчиксем çак юмаха та сирсе ячĕç, вĕсем кунсеренех нимĕçсен вуншар самолечĕсене персе ӳкереççĕ, Германин пиншер салтакĕсене пĕтерсе тăкаççĕ, Берлин тата Германин ытти хулисем çине тăтăшах вĕçсе пырса бомбăсем пăрахаççĕ.

Тăватă эрне каялах ĕнтĕ Берлинри радио совет çарĕ хăйĕн юлашки резервисене çапăçăва кĕртсе ячĕ тесе пĕлтерчĕ. Анчах та Германи çарĕ вилнисемпе аманнисене шутласан питех те пысăк сухатусем туни, çавăн пирки вара Германири госпитальсемпе учрежденисем пурте кăна мар, тата Чехословакири, Польшăри, Румынири, Болгарири госпитальсемпе учрежденисем те пĕтĕмпех тулса ларни çак мухтанчăк сӳпĕлтетӳ пĕтĕмĕшпех кулăшла пулнине ӳса парать. Ыйту тухса тăрать: Хĕрлĕ Çар гитлерла кĕтӳсене мĕнле вăйсемпе çапса çавтери пысăк сухатусем кӳрсе пырать-ха?

Вăрçăн стратегиллĕ тĕллевĕсене пурнăçа кĕртеймен пирки тата Мускава, Ленинграда, Киева «пĕр уйăх хушшинче» туртса илес плансем пĕтсе ларнă пирки, Германи çарĕн командованийĕ граммофон пластинкине улăштарчĕ те: Германи çарĕн тĕллевĕ хуласене туртса илесси мар, Хĕрлĕ Çарăн чĕре вăйĕсемпе материальнăй средствисене пĕтерсе тăкасси пулать, тесе калама тытăнчĕ. Анчах та вăрçăн икĕ уйăхĕ кăтартса ланă тăрăх, Хĕрлĕ Çар пĕтсе ларман кăна мар, вăрçăн кашни кунĕнчех унăн вăйĕсем тата вăл хирĕç тăрасси ӳссе пыраççĕ.

Противник пирĕн чылай облаçсемпе хуласене ярса илчĕ. Анчах вăл çакна çынсене тата материальнăй чаççене питех те нумай çухатнипе çеç тума пултарчĕ. Юлашки виçĕ эрне хушшинче кăна пирĕн войскăсем çак дивизисене çĕмĕрсе тăкнă:

а) 3, 4, 7, 10, 11, 12, 13, 14, 16, 18, 19, 20-мĕш танковăй дивизисене;

б) 5, 11, 24, 26, 28, 30, 32, 44, 50, 52, 62, 68, 71, 79, 86, 94, 95, 99, 101, 106, 110, 111, 121, 125, 137, 156, 157, 161, 206, 253, 262, 263, 290, 293, 297, 298, 299-мĕш пехотнăй дивизисене;

в) 2, 8, 14, 17, 18, 20, 25, 27-мĕш мотодивизисене;

г) «СС» ятлă 3, 11, 30-мĕш тата ытти пехотнăй дивизисене; «Германия», «Викинг» ятлă пехотнăй полксене:

д) тĕрлĕ дивизисен 23, 24, 35, 119, 135, 253, 260, 268, 279, 307, 311, 312, 462, 480, 485, 486, 530-мĕш тата ытти пехотнăй полкĕсене.

Çапăçусем хыççăн нимĕçсен нумай дивизийĕсем хăйсен номерĕсене кăна сыхласа хăварчĕç. Çавăн пек дивизисен ротисенче, тытăкăна лекнисем каласа панă тăрăх, 10—12 çын çеç шутланать.

Вăрçăн икĕ уйăхĕ хушшинче Германи çарĕ, вилнисене тата аманнисемпе тытăкăна лекнисене шутласан, икĕ миллион ытла çын çухатрĕ. Материальнăй часть тĕлĕшпе те Германи çарĕн çухатăвĕсем çавăн пекех пысăк. Тĕплĕн палăртнă тăрăх, вăрçăн икĕ уйăхĕ хушшинче нимĕçсем 8 пине яхăн танк, 10 пин оруди, 7.200 ытла самолет çухатрĕç.

Пирĕн çухатусем тĕлĕшпе нимĕçсен пропаганди çакăн пек фантастикăлла цифрăсем кăтартса парать: 14 пин танк, 14 пин оруди, 11 пин самолет, 5 миллион салтак, вĕсенчен тытăкăна лекнисем пĕр миллион ытла иккен. Çакă вăл ăссăрăн суйса элеклени пулса тăрать, ăна, паллах, пуçне çухатман пĕр çын та ĕненес çук. Çак элек мĕн тума кирлĕ пулни питех те лалла: нимĕç войскисен халама çук пысăк çухатăвĕсене пытарса хăварасси, Хĕрлĕ Çара çиçĕм пек хăвăрт пĕтерсе тăкас плансем путланнине шăлса лартасси, нимĕç халăхне пур майсемпе те улталасси тата пĕтĕм тĕнчери обществăллă шухăша пăтраштарса ярасси пулать

Августăн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç вăйлă çапăçусем туса пынă.

* * *

Старший лейтенант Смышляев командир пулса ертсе пыракан нумай вăхăт хушши кĕрешекен огневой точка противникăн мотомехвойскисемпе артиллерийĕ çине пĕр чарăнусăр персе тăнă. Фашистсем нумай вăхăт хушши ăна тупса палăртайман. Чылай шыранă хыççăн, противник пирĕн ДОТ тăракан вырăна тупнă та ,ун çине артиллерирен пеме пуçланă. Çав ДОТ-а шыранă чухне нимĕçсем 8 танк тата 30 яхăн салтак çухатнă. Тăшманăн темиçе снарячĕ ДОТ сывăхĕнчех çурăлса кайсан, ДОТ гарнизонĕ пеме пăрахнă. Нимĕçсем разведка тума çăмăл танка янă. Хирĕç çапăçакана тĕл пулман пирки танк экипажĕ каялла тавăрăннă. Кăшт тăхтасан ДОТ гарнизонĕ танксен колоннине курнă. Нимĕçсен машинисем тыни çинчен Смышляев юлташ кӳршĕри икĕ ДОТ-а пĕлтернĕ. Фашистсен танкĕсем пирĕн виçĕ ДОТ хушшинчи территорине пырса çитсен, красноармеецсем артиллерирен пеме пуçланă. Наводчик ефрейтор Дударев питех те тĕл пенĕ Вунă снаряд персе, вăл тăшманăн икĕ танкне стройран кăларнă тата 4 танка сиенленĕ. Наводчик красноармеец Сухов икĕ танкăн башнисене персе çĕмĕрнĕ тата виссĕмĕш танкăн гусеницине аркатса тăкнă. Танксем пулеметсемпе орудисенчен леме хăтланса пăхнă, анчах вĕсен снарячĕсем пирĕн ДОТ-сене сиенлеме пултарайман. Тепĕр сехет çурăран тăшман колоннине çĕмĕрсе тăкнă. Çапăçу хирне фашистсен çĕмĕрсе тăкнă 24 танкĕ выртса юлнă.

* * *

Первенцев юлташ командир пулса ертсе пыракан Н-ски соединенин Украинăри Д. хули патне пымалли çулсем çинче нимĕçсен хаяр атакисене темиçе кун хушши вăйлă çапăçнă хыççăн, нимĕçсен ыштă вăйĕсем хĕснипе, Н-ски соединенин часĕсем чакма пуçланă. Б. хули патне пымалли çулсем çинче, урамсемпе площадьсенче фашистсен 3 пин çынна яхăн вилсе пĕтнĕ тата аманнă. Пирĕн чассем Германин 36 танкне, 30 бронемашинине, 2 зенитнăй установкине, 30 мотоциклне тата ытти нумай хĕçпăшалсене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дельцов лейтенантăн батарейи К. районĕнче огневой позици йышăнса тăнă. Нимĕçсен 30 танкĕ пирĕн артиллеристсене ăнсăртран атакăланă. Огневой взводăн командирĕ старшина Щербаков юлташ тата боецсем Охрименко, Потопов, Хворостюк юлташсем орудисене хăвăртрах уçă позици çине кăларса тăратнă та, тăшман машинисем çине тӳрĕ наводкăпа пеме пуçланă. Темиçе минута хушшинчех нимĕçсен 12 танкне пĕтерсе тăкнă. Ытти машинисем каялла тарнă.

* * *

Кĕçĕн сержантăн Кругляков юлташăн сыхăну отделенийĕ часăн командный пунктĕнчен пуçласа малти позици патне çитиччен телефон линийĕ карнă. Кĕтмен çĕртен çул çинче нимĕçсен икĕ машини курăнса кайнă. Çухалса каймасăр, хăюллă связистсем çул хĕринчи йывăç тĕмисем хушшине пытанса выртнă. Танксем вĕсен тĕлне çитсен, сержант Кругляков танксенчен пĕрин çине горючи тултарнă бутылка ывăтнă. Унран пример илсе, ытти связистсем те çавăн пекех тунă. Танксем çине бутылкăсемпе гранатăсем ывăтнă. Танксенчен пĕри çунма пуçланă, иккĕмĕш каялла çавăрăннă та васкасах тарнă.

* * *

Капитан Абраменко ертсе пынипе 18 красноармеец противник тылне шала кĕрсе кайса, белофинсен салтакĕсене 30 çын ытла, инçете перекен тăватă оруди, 6 миномет тата икĕ станковăй пулемет пĕтерсе тăкнă.

* * *

Районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ Куракин юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ августăн уйăхĕнче унăн кун хушшинче нимĕçсен 85 салтакне тата 11 офицерне пĕтерсе тăкнă. Шоссе çулĕ çинче засада организацилесе, партизансем 13 мотоциклист-посыльнăя, икĕ танкеткăпа тата продовольствипе фураж тиенĕ утлă 21 повозкăна тытса илнĕ. Нимĕçсен комендатури панă приказ тăрăх, С. районĕнчи ялсенче пурăнакансен пурин те взрыв туса аркатнă кĕпере юсанă çĕрте виçĕ кун хушши ĕçлемелле пулнă. Ĕç пĕтернĕ хыççăн малтанхи кунĕнчех çĕрле партизансем мĕнпур кĕпersене сӳтсе тăкса сунтарса янă. Куракин юлташăн отрячĕ фашистла влаçсен мĕнпур мероприятийĕсене арката-арката ярать. Л. хулинче нимĕçсем халăха арман юсама хушнă. Арман патне строительство материалĕсене турттарса пырса тăкасан, партизансем çĕрле йывăçсене вутă тĕртсе янă. Нимĕçсем районра телефон линине юсаса ситуме ĕлкĕричченех, партизансем темиçе километр хушшинче проводсене сӳтсе тăкнă.

* * *

Германи çарĕ хĕвелтухăçĕнчи фронтăн мĕнпур енĕсенче калама çук пысăк çухатусем тӳсет. Тытăкăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем каласа панă тăрăх, нумайĕш чаççен командирĕсем командованичен вилнĕ, аманнă тата пĕр хыпарсăр çухалнă салтаксем вырăнне татти-сыпписĕр çĕнĕрен те çĕнĕ пополненисем ярса пама пытаççĕ. Германин 8-мĕш бронедивизинчи тытăкăна лекнĕ офицер К. Бренинг çалла каласа панă: «Пирĕн дивизи хăйĕн личный составĕн 3/4-мĕш пайне çухатрĕ». Çав дивизинченех тытăкăна лекнĕ салтаксем Б. Кинстлер тата Э. Гартман çырăплетсе панă тăрăх, вĕсен ротисене йăлтах пĕтерсе тăкнă, вĕсенче 5 салтакран ытла юлман, вĕсем те тытăкăна парăннă. 226-мĕш пехотнăй дивизин 284-мĕш полкри тытăкăна лекнĕ салтак Р. Меллинг çапла каланă: «Эпĕ хуть-шăннă çапăçура пирĕн пĕтĕм батальока пĕтерсе тăкрĕç. 80 салтака тытăкăна илнĕ, ытти сене вĕлернĕ е амантнă». 52-мĕш артиллерийски полкăн салтакĕ Г. Крафт çапла каланă: «Пирĕн полк питех те йывăр çухатусем тӳсрĕ. Йывăр орудисем пеме чарăнчĕç. Лашасем ывăнса çитнипе ӳкрĕç. Вырăссен артиллерийĕ пирĕн çине татти-сыпписĕр персе тăчĕ. Пĕтĕм çул нимĕçсен вилнĕ салтакĕсемпе тулса ларнă». 394-мĕш пехотнăй полкăн тытăкăна лекнĕ салтакĕсем И. Лауб тата В. Шмунк çапла каласа панă: «Н. юханшывĕ урлă каçнă чухне пирĕн полка йăлтах пĕтерсе тăкрĕç, тытăкăна лекнипе çеç сахаллăшĕ çăлăнса юлчĕç». 486-мĕш пехотнăй полкăн салтакĕ О. Фельзинг çапла каланă: «Пулеметран персе тата штыксемпе атакăласа пирĕн ротăна 15 минута хушшинче пĕтерсе тăкрĕç. Пĕтĕм ротăран иккĕн çеç юлтăмăр: малтанхи кун аманнă пĕр салтак тата эпĕ».

Горючине перекетлеççĕ

ТАВАЙ. Предприятисенче, машинно-тракторнăй станцисенче ĕçлекенсем ĕç тухăçлăхне куллен ӳстерсе пыраççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем средствăна, чĕртавара тата горючине нумай перекетлесе хăвараççĕ.

Тавай машинно-тракторнăй станцинчи комсомолец П. Коровин юлташ ертсе пыракан трактор бригади трактористсемпе ĕçлемелли нормăна 200 процент тăрăн тултарса ĕçлет. Унăн бригади кăçал 3.438 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Т. Сорокин юлташ СТЗ тракторпа ĕçлесе — 775 килограмм, П. Салмин юлташ «У-2» трактор çинче — 839 килограмм, И. Семенов тракторист 616 килограмм горючи перекетленĕ. Вĕсем пурте ĕç нормине 170—200 процент тултарса пыраççĕ.

Машинно-тракторнăй станцинче ĕçлекен трактористсем горючи перекетлес тĕлĕшпе хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртеççĕ.

В. ДАНИЛОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ ФЛОТ. Укерчёк çинче: Сулахайра — Н-ски истребительнăй эскадрилья комиссарĕ Л. А. Федоров (сулахайра) тата кĕçĕн лейтенант орденоносец В. Н. Алегуров летчик-истребительсем вĕçнине сăнаса тăрасçĕ.

К. ХАЛДЕЙ фотоукерчёкĕ (ТАСС).

Капитан Шубиковăн виççĕмĕш орденĕ

Тăватă бомбардировщик Констанца çине черетлĕ рейда тухса кайнă. Çакă вăл пысăк боевой вĕçевсенчен пĕри пулнă. Тăватă бомбардировщика икĕ орден илнĕ капитан Арсений Васильевич Шубиков ертсе пынă. Боевой задани кĕске тата пур енчен те палăк пулнă: Констанца çине пырса кĕмелле, ĕлĕкхи вĕçевсенчен çĕмĕрлемесĕр юлнă нефть базисене пĕтермелле.

Бомбардировщиксем çухе те çăмăл пĕлĕтсен хыçне пытана-пытана çултен вĕççе пынă.

Пырса çитсен, всем сапаланса кайнă, пĕр вăхăтрах пур самолетсенчен те хытă çĕмĕрекен хăватлă бомбăсем аялалла вĕççе аннă. Взрывсем сывлăша чĕтретеççĕ. Нефть бази çинче çавтери пысăк çулăм хăпарать. Унпа юнашарах тата тепĕр çулăм юпи çĕкленсе тухать. Констанца çинчи пĕлĕт çăра хура-хĕрлĕ тĕтĕмпе витĕнет. Каллех хăлхана хупласа кĕмсĕртетни илтĕнет. Акă ĕнтĕ пиншер тонна нефть тултарнă баксем сывлăша сирпĕнеççĕ.

Шубиков хăйĕн тăватă бомбардировщикне хăй каялла илсе тавăрăнать, лайăх маневрсем туса, çыранри батарейăсен линичен ăнăçлăн тухса хаять. Пĕлĕтсен хушшинчен «Мессершмитт-109» килсе тухать. Шубиков тăшман çине тӳп-тӳрĕ пырать. Икĕ самолечĕ те пысăк хăвăртлăхпа сывхарасçĕ. 500, 400, 300, 200 метр! Яланхи пекех, фашист халĕ те тӳссе тăраймасть, айккине пăрăнать. Сывлăштри вăрă-хурах хыççăн янă пулемет черечĕ хăйĕн ĕçне тăвать, «нервăсен тĕрекне кăтартакан» кĕске çапăçăва питех те ĕненмелле татса парать.

Кунта капитан Арсений Шубиковăн чаплă боевой вĕçевĕсенчен пĕрне кăна кăтартса панă. Нумай пулмасть вăл Дунай урлă каçакан Черноводы станци патĕнчи Румыни чугунçулĕн чи пысăк кĕперне çĕмĕрес тĕлĕшпе туса ирттернĕ операцине ертсе пынă.

Совет самолечĕсем группăсемпе пĕрин хыççăн тепри пынă, бомбăсен серине тĕл пăрахнă. Пикировщиксем хăйсен базине тавăрăнсан, капитан Шубиков çапла каласа панă:

— Халĕ ĕнтĕ доходсемпе сиенсене шутласа пăхар. Доходсем: кĕперĕн темиçе сооруженийĕсем сывлăша вĕççе кайрĕç; 140 метрлă пĕр ферма пĕтĕмпех шыва ӳкрĕ; кĕперĕн аялти сарăмĕ айĕнчен иртекен нефтепровода пĕтернĕ, кĕпертен аякра мар тăракан пĕр транспорта бомбăсем пăрахса çĕмĕрнĕ. Сиенсем пирки илсен, вĕсем пирĕн пулман. Пур машинăсем те килте.

...Виçĕ орден илнĕ Арсений Шубиковăн хăюллă ĕçĕсемпе боевой чапĕ çинчен Совет Хура тинĕс летчикĕсем савнашкал каласа парасçĕ. Эпир виçĕ орденлă тесе калатпăр, мĕншĕн тесен унченхи Хĕрлĕ Ялав тата Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсем çумне халĕ Ленин орденĕ хутшăннă. СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1941 çултн августăн 13-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх капитан Шубикова Ленин орденĕпе наградăланă.

Г. НИЛОВ.

(«Труд» хаçатран).

„ДРАЙ АВТАН“

Сывăхри вăрман урлă пушар çутти те курăнма чарăнман-ха, анчах яла нимĕç салтак-мародерĕсем пырса кĕме те ĕлкĕрнĕ. Вĕсем васкасах ялти карташсене пăхса тухаççĕ, сарайсенче ухтараççĕ, подвалсене тустарса тухаçсе. Пăхса çавăрăннă хыççăн вĕсем хаярран кăшкăрса халăха пухаççĕ:

— Драй автан!

Çак сăмахсем мĕне пĕлтернине колхозниксем пĕлеççĕ: мародерсем нимĕн тăхтамасăрах мĕнпур чăхасемпе хурсене пама хушаççĕ. Вĕсем, Гитлерăн çак ырханланса кайнă салтакĕсем, тутлă апат çиесшĕн. Фронта тухса каяс умĕн вĕсем васкасах темиçе сăмах вырăсла вĕреннĕ. «Автан» сăмахăн кунçулĕ раснах ăнăçлă пулнă. «Драй автан» — виçĕ автан! — тесе вĕçĕмренех сухăрашаççĕ вĕсем вырăссемпе украинецсен хăйсем чĕртсе сунтарса янă, тĕтĕмленсе выртакан ялĕсенче. Çак сăмахсене халăх лайăх ăнланса илчĕ. Халĕ ĕнтĕ нумай вырăнсенче нимĕç мародерĕсене хăйсене те «драй автан» тесе чĕнеççĕ. Пирĕн çар нимĕçсенчен туртса илнĕ ялсенче, фашистсем тăнă вырăнсенче пирĕн боецсем порнографиллĕ открыткăсем, çырусем, вăрланă хĕрарăм кĕпи-тумтирĕ тултарнă чемодансем, пушă эрех кĕленчисем, сутенерсен маршне — Хорст Вессель çинчен хунă юрра — пичетленĕ сӳхе кĕнекесем тупаççĕ.

Пĕррехинче каçхине оборонăн малти хĕрринче пĕр çамрăк лейтенант çапла каларĕ:

— Фюрерăн алкоголикĕсем хăйсен вăхăчĕпе мăнле усă курнине эпир питĕ лайăх пĕлетпĕр. Пирĕн участокра вĕсем 11 сехетре эрех илеççĕ. Усĕрăлсе кайсан, вара атакăна тухса каяççĕ, анчах мухмăрĕ вĕсен фашистла начальство ĕмĕтленнинчен иртерех пуçланать. Вара тепĕр çур сехетрен çапăçу хирĕнче вилĕсем çеç курăнаççĕ. Чĕрĕ юлнисем тискеррĕн сухăрашса каялла тараççĕ.

Нумаях та пулмасть çакăн пек ӳсĕрсем атака тунă чухне пирĕн часть Вальтер Б. ятлă старший ефрейтора тыткăна илнĕ.

Вăл çапăçура йывăр аманнă пулнă, аталанă май тăтăшах: «Гитлер ухмаха ернĕ — унăн ялан малалла та малалла кай...» тесе пакăлтатнă.

Урăлсан, Вальтер Б. çапла каласа панă: пирĕн ротăри кадровăй состав çурри ытла вилсе пĕтрĕ, чĕрĕ юлнисем ыран мĕн пулассине пĕлмеççĕ.

Ăнăçăр вăрă-хурахсем, хыçран хистенĕ пекех, Совет Союзăн пуян хулисем патнелле пыма тăрăшаççĕ, саратса вăрă-хурахланса карланкă таранах тăранма ĕмĕтленеççĕ. Çаратассипе пусмăрласи нимĕç салтакĕн ремесли, тискер кайăкла вĕлересси — нимĕç салтакĕсем канма чарăнмă вырăнти камит вырăнне пулса тăчĕ.

Нимĕçсем йышăнса илнĕ В. ялĕнче пĕр хĕрарăм урам тăрăх чĕчĕ ачине йăтса пынă. Ун патне кăштах ĕçнĕ нимĕç унтерĕ пынă. Хĕрарăм хăранипе макăрса янă. Нимĕç мăнкăмăллăн шăлне йĕрнĕ те ачана хăй аллине илнĕ.

— Арçын ача-и? — тесе ыйтнă.

Хĕрарăм хăранипе сăмах уçма та хăяйман. Нимĕç унтерĕ тарăхса кайнă та, ачана алă вĕççĕн çӳлелле çĕклесе çĕр çине çапнă.

Çакна мана нимĕçсен тылĕнчен нумаях та пулмасть таврăннă партизан каласа панă. Вăхăтлăха тытса илнĕ ялсен ишĕлчĕкĕ çинче вĕçĕмренех «Драй автан!» тесе кăшкăракан вăрă-хурахсем хыççăн юнлă йĕр тăсăлса пырать.

Фашистсен çамрăк пуçкасаканĕсен арăмĕсене Гитлер, ĕнесемпе кĕсресем пекех, случной пунктсене хăваласа пухма хатĕрленет; çак пуçкасакансем этемлĕхĕн мĕнпур сăн-сăпатне сухатнă. Вĕсене вĕлерме, пусмăрласа мăшкăллама, çаратма ачаранах вĕрентеççĕ.

Салтаксен кутамккисенче начальство фашистсем хушшинче саракан Гитлер «Афоризмĕн» сӳхе сборникĕсемпе пĕрле час-часах порнографиллĕ открыткăсем, вулама намăс çырусем тĕл пулаçсĕ. Нимĕçсен вĕлернĕ летчикĕн бумажникĕнче Парижри оккупацилле власть ăна публичнăй сыртсене çӳреме ирĕк панă пропуска тупнă. Германие тытса тăракан аскăнчăк психопатсем нимĕçсен хальхи вăхăтри ăруне аскăнлатса, намăссăрлатса ячĕç.

Историн приговорĕ хаяр та каçарусăр: фашистла çăхансен ушкăнĕсем хăйсен пысăк тата пĕчĕк «фюрерĕсен» аташуллă идейисемшĕн юнпа тӳлĕç.

В. САЯНОВ.

(«Известия»).

Эпир сирĕнпе, хаклă ленинградецсем!

Августăн 22-мĕшĕнче ĕç пĕтнĕ хыççăн Шупашкартри пĕрремĕш номерлĕ Типографичăн рабочисемпе служащисем митинга пухăнчĕç. Главнокомандующий Маршал К. Ворошилов, ВКП(б) Ленинград Хула Комитечĕн секретарĕ А. Жданов, Ĕçсăнăн Депутачĕсен Ленинград Хула Совечĕн Исполком председателĕ П. Попков юлташсем Ленин хулинчи мĕнпур ĕçсăннисене чĕнсе калани çинчен типографи директорĕ Лифшиц юлташ каласа панă. Ун хыççăн типографичăн рабочисемпе работницăсем Солдатченко, Гуревич тата Солодовников юлташсем сăмах тухса каларĕç.

— Ленинград хули çине этемлĕхĕн усал тăшманĕсем пĕрре кăна мар таçăннă. Анчах та Ленинград хăйĕн историйĕнче нихăçан та тăшман аллинче пулса курман. Пролетариллĕ революцин центрĕнчи — Ленин хулинчи рабочисем, работницăсем тата мĕнпур ĕçсăннисем Ленинград сывăхĕнче Германи çарĕсене çĕмĕрсе тăкнине эпир астăватпăр. Çук, ку расра та юнлă фашистсем Ленинград урамĕсене ура ярса пусаймĕç. Ленинград хулине тăшманран сыхлама Ленинград хулинчи ĕçсăннисемпе пĕрле Пĕтĕм Совет Союзĕнчи ĕçсăннисем тăраççĕ. Эпир сирĕнпе, хаклă ленинградецсем, эпир сире пулăшма яланах хатĕр тăратпăр, — çапла каласçĕ типографичăн рабочисем.

Митингра йышăннă резолюцире рабочисем çар ĕçне вĕренессине лайăхлатма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, Хĕрлĕ Çара тата вăйлăнрах пулăшма, тыла сирĕплетме пулчĕç.

* * *

Августăн 22-мĕшĕнче Шупашкартри спирт заводĕнчи рабочисемпе работницăсен тата служащисен митингĕ пулса иртнĕ. Кунта вĕсем Çурçĕр хĕвеланăç енчи Главнокомандующий Ворошилов, ВКП(б) Ленинград Хула Комитечĕн секретарĕ А. Жданов, Ĕçсăнăн Депутачĕсен Ленинград Хула Совечĕн Исполком председателĕ П. Попков юлташсем Ленинград хулинчи мĕнпур ĕçсăннисене чĕнсе каланă çинчен пĕлтернĕ хыпара итлерĕç.

Рабочисем, работницăсем тата служащисем революцилле çапăçусенче пиçĕхнĕ Ленин хулинчи рабочисем нимĕç фашисчĕсене çапса аркатасса шанса тăраççĕ. Вĕсем оборона ĕçне вăйлатма, çар ĕçне лайăх вĕренме, ĕç тухăçлăхне хăпартма пулаççĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕн задачисем

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕç вĕçне сывхарса пырать. Августăн 25-мĕшĕнче çак ĕçсен юлашки тапхăрĕ пулса тăракан канашлусем—учительсен августри канашлăвĕсем пуçланаçсĕ. Канашлусем иртнĕ вĕренӳ çулĕнчи ситĕнӳсемпе çитменлĕхсене пăхса тухса, çĕнĕ вĕренӳ çулĕнчи тĕп задачăсене палăртса хăвармалла.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче шкулсемпе учительсем умĕнче пысăк та анлă задачăсем тăраççĕ.

Чи малтан сутĕç органĕсен, шкулсемпе учительсен шкул çулне çитнĕ ачасене паянхи вăрçă условийĕсенче пурне те шкула явăстарас задачăна пурнăçа кĕртмелле. Çак ĕçре шкул çулне çитнĕ ачасем валли шкула çӳреме, шкулта ăнăçлă вĕренме кирлĕ условисене пурне те туса парасси палăк вырăн йышăнса тăрать. Шкула çӳреме тивĕçлĕ ачасем хушшинче хĕрлĕ Çара кайнă çынсен ачисем сахал мар. Çав ачасене тумтир тĕлĕшĕнчен пулăшмалла, шкула аякран çӳрекенсем валли шкул çумĕнче общежити кирлĕ, çавăн пекех вĕсене валли апат-çимĕç хатĕрлес ыйту та палăк вырăнта тăмалла.

Шкул руководителĕсен умĕнче шкул сурчĕсемпе тĕрĕс, вырăнлă усă курас задача та тăрать. Хăшпĕр шкулсенче занятисене сменăпа ирттереме тивет. Вĕренекенсене классем тăрăх тĕрĕс вырнаçтарса тухас, хăш класа мĕнле сменăра вĕрентес ыйтупа шкул руководителĕсен çителĕклĕнех интереслемелле. Сменăпа ĕçленĕ çĕрте шкул сурчĕн кашни квадратлă метрĕпе тĕрĕс усă курмалла, шкул сыртĕнче тивĕçлĕ тасалăх тытмалла, шкул сыртне вутă хутса ăшăтас, шăлса е çуса тасатас вăхăта тĕрĕс йĕркелемелле. Кĕçĕн классене иккĕмĕш е виççĕмĕш сменăра вĕрентесси пулмалла мар.

Государство укçи-тенкине перекетлес майпа, вак-тĕвек классене пĕр учитель аллине памалла тăвас пулать. Çав вактĕвек темиçе класпа ĕçлеме лайăх учительсене, ĕçре пысăк опыт илнĕ учительсене уйăрса çирĕплетмелле, вĕсене сутĕç органĕсен методика пĕрлешĕвĕсем енчен куллен пулăшу парса пымалла.

Вĕренӳ пахалăхне çĕклесси, вĕренекенсем вĕренӳре кая юлса пынине, пĕр класрах иккĕмĕш çула юлса пынине пĕтересси, пĕтĕм шкул ĕçне çӳллĕ пусăма хăпартасси—палăк задача пулса тăрать. Вĕренекенсен пĕлӳлĕхне, культурине, тавракурăмне, вĕсен практикăллă хăнăхăвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле. Пирĕн совет шкулĕнче вĕренекенсем тăван чĕлхепе те, вырăс чĕлхипе те тĕрĕс каласма, çырма, вулама пĕлччĕр, вĕсем халăхсен историне пĕлччĕр, хальхи вăхăтра пулса иртекен палăк событисене тĕрĕс ăнланса пыччăр, социализм строительствинче пур енĕпе те хатĕрленнĕ усăллă çынсем пулччăр.

Çитес вĕренӳ çулĕнче физкультурăпа çар ĕçне вĕрентес енĕпе татăклă улшăнусем тумалла. Вăрçă условийĕсенче, тĕнчери лару-тăру хĕрсе пынă вăхăтра, физкультурăпа çар ĕçне вĕрентесси шкулсенче тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла. Çак предметсемпе урокра кăна ĕçлени пачах та çителĕксĕо, ку енĕпе класс тулашĕнче ытларах ĕçлемелле, çар кружокĕсен ĕçне вăйлатмалла. Çак ĕçсене ертсе пыма ĕçе пĕлекен, çирĕп дисциплинăллă çынсем уйăрса çирĕплетес пулать.

Паллах, хальхи условисенче шкулти воспитани ĕçĕ тата анлăрах та вăйлăнрах пулса пымалла. Шкулăн тĕп задачи—пирĕн çамрăксенчен тăван çĕршыва чун-чĕререн юратакан çулăмлă патриотсем, тăшмана мĕнпур хаярлăхпа курайман паттăрсем пăхса çитĕнтересси пулса тăрать. Пирĕн шкулăн ачасене ĕç çине социализмла пăхма, пĕр-пĕринпе туслă, юлташлă пулма вĕрентмелле. «ССР Союзĕ, совет çыннисене мĕн ачаранах, мĕн шкул çулĕнчен пуçласах, чăн-чăн çирĕп юлташлăхра ӳстерсе çитĕнтерсе пырсан, татах та вăйлăрах пулĕ. Вара, çын Хĕрлĕ Çара пырсассăн е фронта лексессĕн, унăн çав юлташлăхĕ çăмăллăнах çапăçури юлташлăх пулса тăрĕ» (М. И. Калинин). Çакă 1938 çултах каланă сăмахсем паянхи куншăн та питĕ вырăнлă, шкулта ĕçлекенсем вĕсене воспитани ĕçĕнче питех те çирĕппĕн асра тытса пымалла.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче шкулсен общественăлла-практикăллă ĕçĕ уйăрăмах хисепре пулма тивĕçлĕ. Пирĕн учительсемпе шкул ачисен халăх хушшинчи агитаци ĕçĕнче, колхозсемпе предприятисене практикăллă пулăшу парас ĕçре хăйсен пысăк активлăхне кăтартса памалла. Кашни учитель, аслă классенче вĕренекен кашни шкул ачи агитатор пултăр.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче пирĕн çутĕç органĕсен, шкулсен, уйăрăм классен хăйсен вĕренӳри дисциплинине тата ытларах çирĕплетмелле, ĕçри ответлăха тата çӳлерех çĕклемелле. Пĕтĕм ĕçе вăрçă условийĕсене пăхăнтарса йĕркелемелле. Кашни учитель, кашни вĕренекен хăйĕн тылри ĕçĕ фронта çирĕплетме, çĕршыв оборонине тĕреклетме пулăшнине ăнланса ĕçлетĕр, хальхи вăхăтра, пирĕн Хĕрлĕ Çар боецĕсем фронтра тăшмана хирĕç çапăçса юн тăкнă чухне, уйăрăмах дисциплиннăллă пулмаллине яланах асра тыттăр, дисциплинăна пăсни, ĕçе тимлĕн туманни тăшмана пулăшни пулнине чухлатăр, тылра та фронтри пекех пĕтĕм вăя хурса ĕçлетĕр.

А. ОТАЧКИН.

Фронтран килнĕ çырусем

I. „Милиционер„

Манпа юнашар ларакан шофер хаваçăн кулса илчĕ те: «Паша, юратăп эпĕ çакăн пек çулпа сехетре 50—60 километр таран хăвалама», терĕ. Çулăн икĕ енĕпеле акаци тĕмисем хăвăрттăн каялла юлаççĕ. Ирхине 8 сехет тĕлне станцине çитсе чарăнтăмăр. Машина патне шофера хăваруа лавкана кĕрсе кайрăм. Хама кирлĕ таварсене ыйтса пĕлнĕ хыççăн, документсем хатĕрлеме тесе, чӳрече патне вырăн йышăнтăм. Çав вăхăтра магазина милиционер тумĕпе тумланнă пĕр çын пырса кĕчĕ, вăл полкăсем çине пăхса çаврăнчĕ, унтан продавец патне пырса, шăппăнтарах, пĕр хулана кайма çул ыйтрĕ: «Хаклă юлташ, кала-ха, Т. хулана хăш çулпа çитме пулать, вăл çулпа çӳременни нумай пулать, çулне манса кайнă».

— 10 сехет те 45 минутăра поезд пулать.

— Çук, эпĕ автомашинăпа, машина çинче çемье. Мана машинăпа кайма çул кирлĕ.

— Вăн мĕнле, аван япала,—тесе ура çине тăрса, милиционер патне сывхартăм.

— Милиционер юлташ, ăçта çитиччен?—тесе ыйтрăм.

— Инçех мар, Т. хулине,—тесе маненнелле çаврăнса тăчĕ.

— Документ пур-и?

— Пур.

Унтан вăл мана пĕчĕк кошелекран кăларнă паспортне тыттарчĕ. Виçĕ çуллăха панă паспорт, фото-ӳкерчĕкĕ те пур, паспорт çинче И. хулинчи милиции уйрăмĕн пичечĕ. Паспорта 1938-мĕш çулти августăн 13-мĕшĕнче панă. «1938» çул тенине пăхса тарăн шухăша кайса тăтăм. Мĕнле япала, 1938-мĕш çулта вăл хулара милици те пулман. Мĕншĕн тесен вăл хула 1940 çулта тин совет хули пулса тăнă.

— Ну, юрĕ, айтăр, кайрăмăр, çул кăтартса яратăп, — тесе паспортне хам аллах хăварса тула тухрăмăр. Тулта машина çинче пĕр хĕрарăм, икĕ арçын кĕтсе лараççĕ.

— Ав, çав сăрт çине çитиччен,—тесе шофер çумне кĕрсе лартăм, хам шофера хыçалтан пыма хушса хăвартăм. Сăрт çинче аэродром. Юнашар ларакан шофера аэродромалла çул тытма хушрăм.

— Акă, çитрĕмĕр те! — тесе «милиционерсене» машини мĕнĕпех часовой аллине парса хăварса, хам аэродром начальникĕ патне васкарăм.

Тĕплĕн тĕрĕсленĕ хыççăн «милиционер» тата унăн юлташĕсем Германи шпионĕсем пулни палăрчĕ.

П. ЗОБОВ.

Действующи арми.

II. Çул çинче

Пирĕн взвод çула сыхласа тăма приказ илчĕ, фашистсен автоколоннине çав çулпа иртсе кайма çарса лартмалла. Пирĕнтен кашниех тĕплĕн пытанса выртрĕç.

Тул çутăлнă тĕле вăрман хĕрринче фашистсен автоколонни курăнчĕ. Эпир вĕсене кĕтсе илме хатĕрленсе выртрăмăр. Машинăсем пирĕн тĕле сывхарса çитрĕç, пĕр машинăна иртерсе ятăмăр. Унтан вăйлăн пеме тытăнтăмăр, фашистсем çине вутлă çăмăр çуса тăмла пуçларĕ. Фашистсен офицерĕсем шыста кайса кĕме пĕлмеççĕ, хыпаланса ӳкрĕç, çухалса кайрĕç. Пĕр самантрах сакăр машина аркатса тăкрăмăр. Систермесĕр пырса çапнă пирки тарăхса урса кайнă фашистсем пирĕн çине пеме тытăнчĕç. Анчах, çав вăхăтра пирĕн тепĕр подразделени флангран пырса çапрĕ. Фашистсем хăйсен çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ машинисене тата вилнĕ салтакĕсене пăрахса каялла тарма пуçларĕç. Эпир чылай салтаксемпе офицерсене тыткăна илтĕмĕр.

Пирĕн красноармеецсем фашистсен икĕ машини çинче тĕрлĕ эрехсем нумай тупрĕç. Красноармеец Е. Антонов, пĕрре эрехсем çине, тепре тыткăна лекнĕ офицер çине пăхса çапла каларĕ: «Ехали на пирушку, попали в ловушку».

Красноармеец **В. ТИХОНОВ.**

Действующи арми.

III. Ленинла-Сталинла комсомол ячĕпе

Этемлĕхĕн чи хаяр тăшманне—Германи фашизмне хирĕç пыракан вăйлă çапăçусенче комсомолецсем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Ленинла—Сталинла комсомол ретне кĕрекен красноармеецсен йышĕ кашни кунах ӳссе пырать, вĕсем çапăçăва комсомол ячĕпе кĕреççĕ.

Пирĕншĕн, комсомолецсемшĕн, тăван çĕршывран, Аслă Сталинран хаклă урах нимĕн те çук. Çавăнпа та эпир арĕслĕхшĕн, тăван çĕршыв чысĕшĕн хамăрăн юлашки тумлам юн юлмиччен çапăçатпăр.

Тăван чăваш республикинчи çамрăксем, сире саламланипе пĕрлех, Хĕрлĕ Çар тылне куллен çирĕплетсе пыма, производствăра пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлеме чĕнетпĕр. Вăрçă ĕçне пикенсе вĕренĕр, кирек хăш вăхăтра та алла пăшал тытса тăван çĕршыва хаяр тăшманран сыхласа хăварма хатĕр пулăр.

Красноармеец **А. ИВАНОВ.**

Действующи арми.

Сикорский патне генерал Андерс янă послани

ЛОНДОН, августăн 20-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: ССР Союзĕнче организацилеме палăртнă Польша çарĕн командующийĕ генерал Андерс генерал Сикорский патне послани янă. Посланинче çапла каланă: Польшăпа Совет Союзĕн правительствисем пĕр-пĕрин хушшинче тунă договора эпир хавассăн йышăннине мĕнпур поляксен ячĕпе сире пĕлтерме эпĕ телейлĕ пултăм. Никама пăхăнса тăман телейлĕ, демократиллĕ Польшăшăн малалла кĕрешме пĕтĕм вăя хума, хамăр юнамăра пама эпир хатĕрех. Германия çĕнтерни Польшăна пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкни кăна мар, тата Польша халăхне пĕтерни пулнине эпир питĕ лайăх ăнланатпăр. Пирĕн чĕресем Польшăри хамăр тăвансен чĕрисемпе, Великобританири, Африкăри, Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи Польша салтакĕсен чĕрисемпе пĕрле тапнă чухне, эпир Польша республикин президентне, çавăн пекех Польша правительствин пуçлăхне хамăр тарăннăн хисепленĕ кăмăл çинчен каласа паратпăр.

Нимĕçсем вăхăтлăха йышăнса илнĕ совет районĕсен территорийĕнче халăха пĕр чарусăр çаратаççĕ. Нимĕç фашисчĕсен салтакĕсем ялсемпе местечкăсенчи халăхран мĕнпур хаклă япаласене пустарса илеççĕ, вылăх-чĕрлĕхсене пусаççĕ, магазинсене çаратаççĕ. Фашистла командовани çавăн пек мародерствăпа çаратăва пур майсемпе те хавхалантарса пырать, çапла тунипе вăл хăйĕн войскисен «мораллĕ сотоянине» çирĕплетме шутлать.

Вĕлернĕ фашист çумĕнче тупнă çак ӳкерчĕк фашистла мародерсен ушкăнне кăтартса парать, вĕсем колхозниксенчен туртса илнĕ сыснана пусма хатĕрленеççĕ. Хăйсен «хăюллă» ĕçне вĕсем фотоаппаратпа ӳкерсе илсе, ĕмĕр асăнмаллăх хăваласăпăн пулнă.

(ТАСС фотохроникин репродукцийĕ).

Стахановла ĕçлесе Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Кирпĕч заводĕнче коллективĕ пысăк çĕкленӳпе ĕçлет. Кашни рабочи тата кашни работница нормăна ытлашшипех тултарма тăрăшать. Л. Тихонова юлташ бригади кулленхи нормăна яланах иртерсе тултарса пырать. Антонов тата Иванова юлташсем 5—6-шер норма тултарса ĕçлеççĕ.

Заводри рабочисен коллективĕ кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçине оборона фондне пама йышăннă. Июль уйăхĕнче вĕсем оборона фондне 1200 тенкĕ панă.

С. ФИЛИМОНОВ.

Çĕршер тонна горючи перекетлеççĕ

КАНАШ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Депори паровоз бригадисем Лунина меточĕпе ĕçлеме хăнăхса пыраççĕ. Поездсене расписани тăрăх илсе çӳреççĕ, пĕчĕк ремонтсене машинистсем хăйсемех туса ирттереççĕ.

— Пирĕн коллектив иртнĕ уйăхра нихăçанхинчен те лайăхрах ĕçлерĕ. Машинистсенчен чылайăшĕ 1500-шер тонкĕ е ытларах ĕçлесе илчĕç,—тет депо начальникĕ Прокофьев юлташ.

Июль уйăхĕнче паровозсем ремонтуса кăлармалли плана ытлашшипех тултарнă. Август уйăхĕнче те нумай рабочисем пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартаççĕ. Слесарь-арматурщиксем Золотухинпа Ефремов, дышловиксем Трофимов, Коночкин юлташсем хăйсене паракан заданине кашни кунах 200 процентран кая мар тултараççĕ. Ĕç тухăçлăхне ӳстернипе пĕр вăхăтрах çунтармалли япаласене ытларах та ытларах перекетлессишĕн кĕрешӳ сарăлса пырать. Июль уйăхĕнче пассажирсем илсе çӳрекен поезд машинисчĕ Сагитов 10 тонна, Чупаев 27 тонна, товарный поездсен машинисчĕсем Крючковпа Конгуров 23 тонна, Юрковскипе Звездин—2,2, Чикинпа Григорщенко юлташсем 20 тонна кăмрăк перекетленĕ. Депо коллективĕнчи машинистсем июнь уйăхĕнче мĕнпурĕ 341 тонна, июль уйăхĕнче 339 тонна кăмрăк перекетлесе хăварнă.

Иртнĕ уйăхра ĕç тухăçлăхне 250 процент ӳстернĕ. Лунин меточĕпе ĕçлени паровозсене юсама лараканхака чылай йӳнетме май панă. Июль уйăхĕнче кашни паровоза юсама лараканхак 307 процент йӳнелнĕ.

Депо коллективĕ хăйĕн пĕтĕм ĕçне фронт интересĕсене пăхăнтарнă. Кашни работникăн ĕмĕчĕ—татах та лайăхрах ĕçлесе тăван çĕршыв вăй-хăватне тĕреклетес, тăшмана хăвăртрах çĕнтерес ĕçре Хĕрлĕ Çара пулăшса пырасси. Килхуçи хĕрарăмĕсем те предприяти ĕçĕнчен уйăрăлса тăмаççĕ. Вĕсем черетпе предприятине сыхлама килеççĕ. Нумайĕшĕ çĕнĕ специальноçсем илме тĕрлĕ кружоксенче вĕренеççĕ. Çак кунсенче хĕрачасене производствăран уйăрмасăр машинист помощникĕсем пулма вĕрентекен курс ĕçлеме тытăнать.

Çĕнĕ строительствăсем

ЕТĔРНЕ. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх шучĕ ӳссе пынă май, районри колхозсенче строительство ĕçĕ кулленех вăйланать. Халĕ 15 колхозра 500 пуç вырнаçмаллăх лаша витисем тăваççĕ, «Борец», «Парижская Коммуна» тата Тельман ячĕпе тăракан колхозсенче ку ĕçе вĕçлерĕç те ĕнтĕ. Ирсери «Комбайн» колхоз лаша витине капитальнăй ремонт турĕ. Çĕнĕрен организациленĕ фермăсенчи выльăхсем валли 8 колхозра витесем лартма тытăннă. Çăвăн пекех, çамрăк пăрусем валли 7 колхозра вите тăваççĕ. Халĕ 20 колхозра чăх-чĕпсем валли çуртсем тума тытăннă.

Çапла вара, районĕпе халь çĕнĕрен 63 вите лартаççĕ, 15 витене юсама тытăннă.

Я. СОРОКИН.

Силос çителĕклĕ пулать

Канаш районĕнчи «Броневик» колхоз 45 тонна силос хыврĕ, 30 лав çулçăллă тураткасса хатĕрленĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмели плана пĕтĕмпех тултарнă. Выльăх витисене пурне те юсанă.

В. ИГНАТЬЕВ.

ОКТЯБРЬСКОЕ. Кăçал «Волга» колхоз 12 гектар çаран утти, 37 гектар клевер ути çулса хатĕрлерĕ. Выльăх апачĕ çителĕклĕх пулать. Колхоз 109 тонна силос хывма пăхнă, халĕ 50 тонна хывнă та ĕнтĕ.

В. ИСАЕВ.

Уйхирте фронтри пек ĕçлеççĕ

ИЕПРЕÇ. Районри колхозсенче ăнса пулнă тырпула пухса кĕртес ĕç организованнопырать. Августăн 16-мĕш тĕлне 7 колхоз ыраш вырса пĕтерсе кĕрхи тулăсене вырма тытăнчĕç. Кĕлтесене капана хываççĕ, авăн çапаççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем уйхирте патриотизмлă пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Вĕсем отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче тылра та фронтри пекех ĕçлемелле текен лозунга асра тытаççĕ. Уйхирте ударлă ĕçлесе гитлерла бандăна хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшса пыраççĕ.

Эпесри Калинин ячĕпе тăракан колхоз (ăна коммунист Якимов юлташ ертсе пырать) уборка ĕçне вăрçă чухнехи йĕркепе туса пырать. Кашни колхозник, кашни колхозница уйри тырпула кĕске срокра, типтерлĕ пухса кĕртессишĕн кĕрешет.

Калинин ячĕпе тăракан колхоз ыраш вырса пĕтерчĕ. Уборкăра 8-мĕш бригада малта пычĕ. Бригадăн куллен 6 гектар вырса пухмалла пулнă пулсан, вăл 7—8 гектар вырнă. Авăн çапма августăн 9-мĕшĕнче тытăннă. Агитатор-учительсем Муратовпа Филиппов кашни кун уя тухса хаçат-журналсем вуласа параççĕ.

Кăлăмкассинчи «Красный фронтовик» колхозра тырпула хăвăртрах пухса кĕртес майпа каçхине те ĕçлессине организациленĕ. Çак ĕçе П. Назаркина, Р. Ермолаева, Н. Прокопьева колхозницăсем пуçарса янă. «Красный металлист» колхозра тырă вырма тухсан 4—5-мĕш кунĕнче авăн çапма тытăннă. МТС молотилки чарăнмасăр ĕçлет. «МОПР» колхозра тырпула МТС молотилкипе çапнă хушăрах тăпачăсемпе çапассине те организациленĕ.

Колхоз производствинче ĕçлекен вăй-питти хăшпĕр арçынсем фронта кайни ĕçе нимĕн те чăмантармасть. Колхоз хĕрарăмĕсем хăйсен упăшкисене, шăлнĕсене фронта ăсатнă хыççăн татах та лайăхрах, тухăçлăрах ĕçлеме пуçларĕç. «Заря» колхоз членĕ Елена Романова, хăйĕн упăшкине фронта ăсатнă хыççăн, уборка ĕçĕнче нормăна 140—150 процент тултарса пыма пуçларĕ. Анна Рябчиковăпа Клавдия Пашкова 170 процент тултарса ĕçлеççĕ. 55 çулхи Марфа Пушкина ĕç нормине куллен ирттерсе тултарать, унăн икĕ ывăлĕ фронтра фашизма хирĕç кĕрешеççĕ.

Халĕ кашни колхозник икĕ хут — виçĕ хут тухăçлăрах ĕçлеме тăрăшать. «Заря» колхоз членĕ Герасим Петров уйхирте нормăна 240 процент тултарса ĕçлет.

«Красный металлист» колхозри 5-мĕш бригадăн бригадирĕ И. Кураков фронта тухса кайнă хыççăн, унăн вырăнне П. Герасимова лартнă. Вăл 17 çулта пулсан та хăйне шанса пана ответлă ĕçе фронтри пек пурнăçласа пырать. Колхозниксене пурне те ĕçе явăçтарнă, подростоксем те ĕçре. Çак бригада малта пырать. Унăн бригадинчи колхозниксем — ватисем те, çамрăксем те — пурте тенкĕ пекех ĕç нормине ирттерсе тултараççĕ. М. Николаевăпа А. Гордеева, ватă пулсан та, нормăна 130—140 процент тултарса ĕçлеççĕ. Çак бригада кĕрхи тырăсене планпа пăхнинчен пĕр кун малтан пухса кĕртессишĕн кĕрешет.

«Правда» колхозра звенопа ĕçлессине тивĕçлĕ вырăна лартнипе ĕç тухăçлăхне пысăкках ӳстернĕ. Мария Афанасьева, Ефросиния Атамова, Анисия Абрамова, Дария Прокопьева ĕçлекен звено ĕç нормине куллен 180 процент тултарса пыраççĕ.

Дм. МИХАЙЛОВ.

Агитаци ĕçне колхозри ĕçсемпе çыхăнтармалла

СОВЕТСКОЕ. Якаткасси ялсоветĕнчи «Волна революции» колхозăн пĕтĕмпе 118 гектар çинчен кĕрхи тырă пухса кĕртмелле. Колхозăн ĕç планĕ тăрăх кĕрхи тырра 6 кун хушшинче вырса пĕтермелле. Çăвăнпа та ĕнтĕ бригадăпа бригада, звенопа звено, колхозниксемпе колхозница социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхозри 69 çын куллен ĕç нормине ирттерсе тултарса пыраççĕ. Колхозăн ĕç норми тăрăх кашни ĕçлеме пултаракан çын пуçне 0,08 гектар вырмалла пулсан, П. Григорьева, П. Игнатьева, П. Николаев юлташсем куллен 0,15 гектаршар, П. Захарова, А. Захарова 0,14 гектаршар выраççĕ. Çăвнашкалах 60 çултан иртнĕ ватă колхозницăсем А. Андреева, П. Кирилова, Т. Александрова тата Т. Николаева юлташсем те куллен 0,10—0,12 гектаршар вырса пыраççĕ.

— Эпир ватă пулин те, халхи вăрçă вăхăтĕнче ĕçлемесĕр ларас килмест. Мĕншĕн тесен пирĕн вăй та тăшмана хăвăртрах çапса аркатма кайтăр,—терĕç ватă колхозницăсем.

«Волна революции» колхозра колхозниксемпе колхозницăсене ĕçлеме пур условисене те туса панă. Вĕсем пĕрле апатланаççĕ, 82 ача валли площадка тунă, вĕсем амăшĕсене ĕçлеме чăмантармаççĕ. Çăвнашкалах «Восход» колхоза та ĕçе лайăх организациленĕ. Çăвăнпа та ĕнтĕ Д. Семякин, И. Емельянов, Горшков юлташсем 70 çула çывхарнă пулсан та кашни кунах 375—400 хĕлте таран выраççĕ. Уйрăмăнах Горшков мучи пур ĕçре те кăтартуллăн ĕçлесе пырать. Вăл суха тунă, утă çулнă çĕрте те кулленки ĕç нормине ирттерсе тултарчĕ тата лайăх пахалăхпа туса пычĕ.

Çак асăннă колхозсенче ыраш вырнă вăхăтра тĕрлĕрен темăсем тăрăх 15 хут калаçусем туса ирттернĕ. Унта пурĕ 1400 çын пулнă.

Анат Ачакри «Новый быт» колхозри комсомол пуçламăш организацийĕ те агитаци ĕçĕсене туса пыма кашни комсомолецăх уйрăм участоксем çумне çирĕплетнĕ. Комсомолецсем агитаци ĕçне колхоз производствинчи ĕçсемпе çыхăнтарса туса пыраççĕ.

Комсомолкăсем, М. Егорова, С. Копрова, А. Перцова, Е. Разумова тата А. Юхтанова юлташсем кулленки ĕç нормине 150—200-шер процент тултарса пыраççĕ. Кăнтăрла каннă вăхăтра колхозниксене агитаторсем хамăрăн тăван çĕршыва тата мухтавлă Хĕрлĕ Çара мĕн вăй çитнĕ таран пулăшма кирли çинчен тĕплĕн каласа параççĕ.

Н. МИХЕЕВ.

ЭПИР КАШНИ ÇАК ВĂХĂТРА ТĂРАТПĂР ЧАПЛĂ ВАХТĂРА. КИРЕК МĔНЛЕ ПĔЧЕК ЕÇРЕ ТЕ КАШНИ МЕНПУР ВĂЙРАН ĔÇЛЕТĔР.

Леспродторгăн подсобнăй хуçалăхĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Леспродторгăн хулара икĕ столовăй ĕçлет. Вăл столовăйсенче хирĕç хăçан та аш-какай апачĕсем пур. Ытти столовăйсемпе танлаштарсан, кунта апат хакĕ те йӳнĕ.

— Мĕншĕн?

Ку ыйтăва хирĕç леспродторг директорĕ Самойлов юлташ çапла ответ пачĕ:

— Пирĕн рабочисем хамăр хатĕрленĕ аш-какая, пулăна çиеççĕ. Хамăрăн продовольстви бази пур. Çăвăнпа эпир аякран сутăн сахал илетпĕр.

Леспродторгăн подсобнăй хуçалăх пур. Ана иртнĕ çулти май уйăхĕнче организациленĕ. Малтанхи вăхăтрах хуçалăхăн 40 пуç сысна тата сурăхсем пулнă. Унтанпа выльăхсен хисепĕ ӳссе пынă—сыснасем 73 пуçа çитнĕ. Вĕсенчен чылайăшне столовăйсене пынă. Çаха вара апат хакне чылаях чакарнă.

Хальхи вăхăтра хуçалăхăн 110 пуç сысна пур, вĕсенчен 2—3 уйăхри çурăсем 21 пуç. Кунсăр пуçне сумалли ĕнесем 3 пуç, пăрусем 3 пуç усраççĕ.

Леспродторг кăçалтан пуçласа пахча-çимĕç таврашсем те хăех тума тытăнчĕ. Çуркунне вăл 7,3 гектар çине çĕрулми, 0,15 гектар помидор, çăвăн чухлех купăста тата хăяр, кăшман, угăлăх тата вăрлăхлăх вика акрĕ. План тăрăх пахча-çимĕçсем 5 гектар çине акмалла пулнă, вăл 14,35 гектар çине акнă.

Хальхи вăхăтра подсобнăй хуçалăхра ĕçлекен работниксем хĕрсех тухăçлă пахча-çимĕçе пуха кĕртме хатĕрленеççĕ. Нӳхреп-подвалсем тăваççĕ, катка-пичкесем юсаççĕ т. ыт. те. Паянхи кун 2 овощехранилище тата купăста-хăяр йӳçĕтме 50 тонна кĕрекен катка-пичкесем хатĕрленĕ.

Леспродторг столовăйĕсене, паллах, подсобнăй хуçалăх туса илекен пахча-çимĕçсем çителĕксĕр пулаççĕ. Уйрăмăнах çĕрулми, купăста чылай кирлĕ. Çăвăнпа леспродторг вĕсене те кирлĕ чухлĕ хатĕрлесе çитерме тăрăшать. Ку таринчен вăл сывăхри колхозсемпе 15 тонна çĕрулми, çăвăн чухлех купăста тăратма договор тунă. Помидор, хăяр т. ыт. çимĕçсем хăйсеннех çителĕклĕ.

Иртнĕ хĕлте, вăрманта хĕрӳллĕ ĕç пынă вăхăтра, столовăйсем начар мар ĕçлерĕç. Вĕсем вăрман касакансене тутлă тата йӳнĕ апат-çимĕçпе тăрантарчĕç. Анчах хăшпĕр продуктсем çитмен пирки япăх ĕçленĕ столовăйсем те пулчĕç. Кăçал ĕнтĕ вăл çитменлĕхсем пулмĕç.

Хăйĕн сăмахне ĕçре пурнăçлать

ВАРНАР. Григорий Киселев Санарпуçĕнчи «Красный Санар» колхозра виçĕ çул хушши бригадир пулса ĕçленĕ. Гитлерла Германи пирĕн социализмлă çĕршыв çине пăрçăна килсе тапăннă хыççăн, Киселев юлташ фронта тухса кайрĕ.

Унăн арăмĕ Ольга Киселева упăшки фронта кайнă чух çапла каланă: «Кай та, тăшмана хирĕç пăтăрăн çапăç, урса кайнă çĕлен-калтасем çĕр пичĕ çинче ан пулччăр. Эпир кунта—колхозра пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлĕпĕр».

Киселевăн çемьи халь колхозра тăрăшса ĕçлет. Ольга Киселева тырă вырнă çĕрте ĕç нормине кулленех 150 процент тултарса пырать. Унпа пĕрле унăн 4-мĕш класра вĕренекен Кара та кашни кунах ĕçе тухать.

Киселев çемьи государствăран пособи илсе тăрать.

С. ВАНИН.



ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Боецсем фашистсем çине переççĕ. (ТАСС фотохроникăри).

ХАЛĂХА ПĔЛСЕ ТĂМА

Ялтă вырăнта сывлăшран тапăннинчен сыхланасси

Кучухнехи вăрçăра фронтпа тыл хушшинче уйрăмлăх çукпа пĕрех. Урса кайнă тăшман войскăсем çине, мирлĕ халăх çине, хуласемпе ялсем çине те тапăнать. Сывлăшри тапăнуран вырăнта сыхланас ĕçе хуласенче кăна мар, ялтă вырăнсенче те йĕркелемелле.

Колхозсенче, совхозсенче тата машинно-тракторнăй станцисенче МПВО (Сывлăшри тапăнуран вырăнта сыхланасси) самозащита групписем тăваççĕ. Çав группăсене ертсе пыракан работниксенчен пĕрин, колхозсенче — ятарласа уйăрнă правлени членĕсем е колхозниксем ертсе пымалла.

Çав группăсем темиçе звеносенчен тăраççĕ: пушар звени, медико-санитарнăй звено, ветеринарнăй звено тата охранăпа сăнав звени.

Пушар звени — çакă ялти ирĕклĕ йĕркепе тунă, 10—12 колхозник хушса вăйлатнă пушар дружини. Звенон обязанноçĕ — пушарсенчен сыхланасси тата вĕсене сӳнтересси. Дружина членĕсем пушар инвентарĕсем юсавлă пулнине сăнаса тăраççĕ, çĕнĕрен инвентарьсем хатĕрлеççĕ, пушар сарайĕсене, тĕштирă амбарĕсене, уйра —калчасене, çĕмеле хывнă тырпула хурал тăраççĕ. Вĕсем килхартишсене тата çулйĕркене пушартан хăрушă пулса тăракан япаласенчен тасатса тăнине, чердаксемпе килхартисене кирлĕ мар япăр-тапăрсенчен тасатнине сăнаса тăраççĕ. Вĕсĕмех зажигательнăй авиабомбăсене тата вĕсем кăларнă пушарсене сӳтерме кирлĕ пулакан шыв, хăйăр е типĕ тăпра кашни хуçалăхра пуррине тĕрĕслеççĕ.

Хăрушлăх пулсан пушар звени ялта пурăнакансене тревога çинчен пĕлтерет. Звено членĕсем зажигательнăй бомбăсене тата вĕсенчен тухнă пушарсене сӳтереççĕ, сӳтернĕ зажигательнăй веществосен юлашкийĕсене пуçтарса, çĕр айне чавса витсе лартаççĕ.

Звенона пушарсене сӳтерес тĕлĕшпе опытлă çынăн ертсе пымалла. Дружина членĕсем сывлăшран тапăннă вăхăтра хăйсен вырăнĕсене тата хăйсен обязанноçĕсене çирĕп пĕлсе тăмалла.

Пушара сӳтермелли инвентарь (пичкесем, витресем, кĕреçесем, багорсем, пуртăсем, ломсем), шыв запасĕ, хăйăр тултарнă ещĕксем — пурте кăтартуллăн тата кирек хăш вăхăтра та усă курма хатĕр пулмалла.

Медико-санитарнăй звенора 4 çынран кая мар пулмалла. Звенона РОКК (Хĕрлĕ Хĕрес обществи) членĕсем те, ятарласа вĕреннĕ хĕрарăмсем те («Готов к санитарной обороне» **значокăн** нормисене панисем) кĕреççĕ. Звенона фельдшерăн, медсестран е врачăн (вăл пулсан) ертсе пымалла.

Звенон обязанноçĕ — **аманнисене** малтанхи пулăшу парасси, халăха санитари енчен хатĕрлесси.

Звенон медикаментсен тата сурансене сыхмалли материалсен запасĕ, носилкăсем, кирлĕ чухне аманнисене урăх вырăна куçарма автомашина е урапа пулмалла.

Ветеринарнăй звено 3—4 çынтан тăрать (выльăхсем 100 пуçран ытларах шутланакан вырăнта 10—12 çынтан ветеринари группине тăваççĕ). Звено е группа выльăхсен картишĕсем патĕнче, выльăх-чĕрлĕх фермисенчи çӳп-çапсене тасатса тăнине, сывлăшран тапăннă вăхăтра выльăхсене хăрушă мар вырăнсене — çырмана, вăрмана хăваласа кайнине сăнаса тăрать. Звено бомба ванчăкĕсенчен, пулăсенчен тата вут-кăвартан аманнă выльăхсене ветеринари ĕнĕпе пулăшу парать, çавна май унăн медикаментсен запасĕ пулмалла.

Охранăпа сăнав звенине уйрăмах çамрăксенчен тăваççĕ. Çав звенори боецсем складсене, выльăх картишĕсене, акнă лаптăксене, садсене, обществăллă çуртйĕрсене уйра — вышкăсем çинче хурал тăраççĕ. Вĕсемех светомаскировкăна пăхăнса тăнине сăнаççĕ. Сывлăшран тапăннă вăхăтра звенори боецсем халăха хӳтлĕхлĕ вырăнсене вырнаçтарма пулăшаççĕ. Пушар тухсан, звено колхозăн, совхозăн, обществăллă организацисен тата граждансен пурлăхĕсене сыхлать тата çăлса хăварас тĕллĕпе ĕçлет.

Уйри (уйхир ĕçĕсем пынă вăхăтра) дозор службине тата дозорсемпе сыхăну тытма звено 13—14 çулхи шкул ачисене явăçтарать. Опыт çакна кăтартса пачĕ: ачасем самозащита групписен активлă помощникĕсем пулса тăраççĕ.

Охрана тата сăнав звени милици органĕсемпе тата истребительнăй батальонсемпе çирĕп сыхăну тытать. Шанчăксăр çынсене тытса милици органĕсене илсе пырать, звенори боецсем шпионсемпе диверсантсене тытма пулăшаççĕ.

Самозащита ĕçĕнче кирлĕ пулсан колхозри, совхозри, машинно-тракторнăй станцинчи мĕнпур халăха явăçтараççĕ.

Подполковник А. ПАСТУХОВ.

Вăрман хатĕрлевĕнчи стахановецсем

ÇĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Механизациленĕ вăрманпункчĕнчи вăрман касакансемпе турттаракансем ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыраççĕ. Двухсотниксен хисепĕ кашни пунктрах хутшăнса пырать.

Çĕмĕрле пунктĕнчи 43-мĕш кварталта (мастерĕ А. Пикселькин юлтăм) Алексей Михеев тата Александр Волков куллен 4 кубометр вăрман касас вырăнне 8 кубометр касаççĕ, Миронов—6—7 кубометр касса хатĕрлет.

Юлашки вăхăтра, август уйăхĕнче, тесарьсем те хăвăртлăхсене ӳстерчĕç. Тесарь Данилин тата Попов нормăна кашни кунах 150—200 процент тултараççĕ.

Мыслец пунктĕнче Афанасьев юлташ ертсе пыракан возчиксен бригади малта пырать. Августăн малтанхи çур уйăх программине бригада 115 процент тултарчĕ. Уйрăм кунсенче вăл татах та ытларах çитĕнӳсем тăвать. Бригадăра 5 çын, пурте вĕсем стахановецсем.

Ку пунктрах лесорубсенчен Федорушко тата Казаков бригадисем аван ĕçлеççĕ. Вăтамран илсен вăл бригадăсем август уйăхĕ пуçланнăранпах плана 110—112 процент тултараççĕ.

Иртнĕ уйăхра ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă çамрăк рабочисем те паха результатсем кăтартаççĕ. Акă Кабаново пунктĕнчи турттаракансем Василий Кириллов иртнĕ уйăхра кашниех 47-шер норма тунă. Халĕ вĕсем кашни кун нормăна 170—200 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Воскресниксене малашне те туса ирттерер

ШУПАШКАР. Хулари комсомолецсемпе комсомолкăсем, союзра тăван çамрăксем тата учрежденисенче, предприятисенче ĕçлекенсем августăн 17-мĕшĕнче воскресникре актившлăн хутшăнчĕç. Çак воскресникре пĕтĕмпе 5.459 çын ĕçлерĕç, вĕсенчен 4000 çын комсомолецсем. Воскресникре тухнисем тĕрлĕрен ĕçсем турĕç. Чугунçул çинче чылай ĕçленĕ. Хăшпĕр организацисем воскресникре малтанах хатĕрленсе тăнă. Авторемонтнăй мастерскойри комсомолецсем воскресникре лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсен нормине 800 процент тултарчĕç. Комсомолец Т. Покровский 4 сехет хушши ĕçлесе плана 300 процент тултарчĕ, Мулыштейппа Сниткин юлташсем 150 процент тултарнă. Госбанк, Пединститут, Наркомзем, горсовет тата ытти çĕнĕ коллективпа воскресникре тухнă. Комсомолецсем, союзра тăван çамрăксем 85 кубометр вутă хатĕрленĕ. ФЗО шкулĕнче вĕренекенсем ĕç нормине 200 — 250 процент тултарса ĕçлерĕç. Шкулта кĕçĕнрех классенче вĕренекенсем тимĕртăмăр, банкăсем тата пĕчĕк кĕленчесем 1500 штука пухнă. Заготзерно склачĕсем патне пыма çул тунă. Ярмарка урамĕнчи çырмасене тултарса тикĕсленĕ çĕрте 578 çын 3731 тенкĕлĕх ĕçленĕ, пристаньре 124 çын 1588 тенкĕлĕх ĕçленĕ. Пурĕ воскресникре 20.000 тенкĕлĕх ĕçленĕ.

Çакнашкал воскресниксене малашне те ирттермелле. Воскресниксем туса ирттерни çĕршыв оборонин фондне вăйлатма, ирсĕр фашистсене хăвăртрах çапса çĕмĕрме пулăшать.

А. ЭРРЭ.

Пурте фронтшăн, çĕнтерӳшĕн!

Унпала эпир Çĕмĕрле çулĕ çинче, Турхан уйне тухнă çĕрте тĕлпултăмăр. Çул хĕрринчи каска çине канма тесе ларсан, нимрен малтан вăл паян радиопа мĕн пĕлтерни çинчен ыйтрĕ, унтан сăмах ун ывăлĕ çине кусрĕ.

Ун ывăлне эпĕ лайăх пĕлетĕп. Типшĕмрех, чĕмсĕртерех лăпкă ача, хăйĕн математикăри пултарулăхĕпе Мускав университетĕнчи паллă профессорсене тĕлĕнтернĕ студент — Михаил Федюков. Математикăна çеç мар, историпе литературăна та вăл аван пĕлет. Ун аллинчен нихăçан та Пушкинпа Маяковский тухман. Çулталăк çурă кашни кун 12-шер сехет ларса, вăл Гегель диалектикипе марксизма вĕренчĕ. Канăç сехетсенче, тĕрлĕ ыйтусем тăрăх пуçарнă тавлашусенче, вăл нимрен ытларах этемлĕхĕн ырă пуласлăхĕпе çитес çапăçусем çинчен каласа юрататчĕ. Халь вăл хăй çав çапăçусенче. Кам пĕлет, тен, эпир ун ватă ашшĕпе ăна асăнса каласа сехетре вăл, марксизмпа, математикăпа авăрланнăскер, хăйĕн хăватлă орудийĕнчен персе фашистсен салтакĕсене аркатрĕ пулĕ.

— Эпĕ ăна шанатăп, — терĕ ашшĕ ун çинчен — пултараканччĕ, унта та пултарма кирлĕ.

Ĕçри кашни пĕчĕк ăнăçлăхшăн пĕтĕм чун-хавалĕпе савăнма пултаракан, çав вăхăтрах пурнăçри кашни вак-тĕвек инкекшĕн хыпса çунма хăнăхнă çын халь тĕлĕнмелле лăпкă. Мĕншĕн тесен, çĕршыв çине вăрçăна килсе кĕнĕ вăрăхурахсене ĕмĕрлĕхех тĕп тăвасса вăл шанать! Унăн вăл ывăл çуратса çитĕнтернĕ, ăна вĕрентнĕ. Нимĕн те унăн хĕрхенмен, пурте унăн пулнă. Халь вăл фронтра — халь те çавах: пурте ывăлăн, фронтăн! Унăн вăл ырми-канми ĕçлет, унăнах оборона фондне сурăх пачĕ. Кирлĕ пулсан татах та сурăх тупăнĕ, ĕне те... Ывăлсем те пулĕç...

Старик хăй ĕçĕпе Çĕмĕрлене васкарĕ, эпĕ уя тухрăм.

Хĕвелĕн йăлтăр шевлисемпе пиçекен çур пуссийĕ кассăн-кассăн шупкаланса, кассăн-кассăн саралса курăнчĕ. Çавал икĕ хĕррипе ял хуралчĕ. Вăл старикăн тăван ялĕ. Ял лешъенче ыраша кĕрхи тулă уйĕ. Унтан трактор кĕрлени илтĕнчĕ. Пĕлетĕп, манăн тантăш унта комбайнпа тыр вырать.

Ак мана хирĕç лаша кӳлнĕ урапа çине ларса пĕр çын хăпарчĕ. Паллатăп: Филипп Шугаев. Чир ăна нумай имшерлетнĕ, йывăрран сывлать, ĕçлеме мар, ларса пыма та кансĕр.

Икĕ эрне вăл больницăра выртнă. Кăшт утнакăрах пулнине туйсан, вăл чăтайман. Вăл утара васкать. Колхозăн темиçе çĕр вĕлле пылхурчĕсем пур. Вĕсем хуçине кĕтеççĕ.

Ава Пирчĕ çырмине пĕр çын чупса анса кайрĕ те çырма лешъенне, сăрт çинелле, чупса улăхрĕ. Вăл 4-мĕш бригадăн бригадирĕ — Иван Арсютов. Ун бригади колхозра никамран малтан ыраш вырса пĕтерчĕ, никамран та малтан тулă вырма тухрĕ. Çав вăхăтрах ыраш акать, утă пухать, вăрман хатĕрлет.

Акă клуб — икĕ хутлă катмар çурт. Каçсерен кунта кино пулать, ирхине, каçхине агитаторсем радио итлеççĕ те кăнтăр кӳлĕмĕсенче бригадăсене саланаççĕ. Клубра колхоз библиотеки, темиçе çĕр кĕнеке. Каллех кунта Çĕмĕрле çулĕ çинче тĕл пулнă старике аса илетĕн. Вăл та çуралнă, пурăннă, ватăлнă, анчах пĕлмен вăл кĕнеке мĕнне. Ывăлĕ университет пĕтернĕ, тĕнчипе паллă профессорсемпе каласнă. Унăн тата ывăл пур — Федор Павлов. Вăл ялта ĕçлет, аллинче — Данте.

Çавнашкал Иван Сарра старикĕн ăраскалĕ. Патша самани ăна вĕрентмен, ачисем пурте аслă е вăтам шкул вĕренсе пĕтернĕ. Пĕр Турхан ялĕнче кăна аслă шкулсенче вĕренекенсемпе вĕренсе тухнисен хисепĕ 50 çынран иртет. Пĕтĕмпех вăл Совет власăн пулăшнипе пулнă.

Патша саманинче Çĕмĕрле тавраш-шĕнчи çынна сĕлĕ çăкăрĕ те кашнинех тивĕçмен, халь ун кĕрекинче тулă çăкăрĕ, ĕлĕк ун пахчинче хăяр та пулса çитеймен, халь арбуз пиçет. Халь хăй вăл тракторпа ĕçлет, комбайн унăн тыр вырать...

Кăнтăр апачĕ. Халь çеç кӳрсе панă хаçат çинче тыткăна илнĕ фашистсен кĕсъисенчен пачки-пачкипе патша вăхăтĕнчи укçасене тупни çинчен вулаççĕ.

— Сентекем! — терĕ пĕри тарăхса, — каллех патшана чĕртесшĕн! Каллех мана сĕлĕ хывăхĕ çине лартасшăн!

—Чăваш кĕнекине каллех пăрăва чăмлаттарасшăн, — терĕ тата тепри.

Çук, пулмасть унашкал! Унăн мар Иван Сарра старик тăватă ывăлне фронта ăсатнă. Унăн мар вăл ĕçрен çĕрле тавраннса кăвак шуçăмла вăранса ĕçе тухать. Унăн мар сахал хут вĕреннĕ Алексей Мадяров хăй тĕллĕн вĕренсе чаплă комбайнер пулнă.

Колхозниксен пухăвĕ. Учитель çĕршыв оборонин фондне туни çинчен кĕскен пĕлтерчĕ. Колхозниксем сăмахсемсĕр пĕр-пĕрин çине пăха-пăха илчĕç. Вĕсенчен никăшĕ те мĕн чухлĕ памалли çинчен шухăшламарĕç. Кам мĕн чухлĕ тата мĕн пама пултарать — пурте фронтăн! Пирĕн çăварти сĕтеклĕ çăкăра ăмсанакан, пирĕн кĕнекесене сунтарса пире сукăрлатма, пирĕн ачамăрсене вĕлерсе, килĕмĕрсене хыптарма килекен тăшман — Гитлер çарне тĕп тума!

Роман Маймасов оборона фондне çĕр килограмм тырă парать, Алексей Тарганов пĕр сурăх. Кам çу, çамарта, кам çăм, сĕт е укçан...

Колхоз хăй оборона фондне 5 пин тенкĕ укçан хывать. 250 центнер тырă парать, 100 килограмм çу тата ытти продуктсем.

Пурте фронтшăн, çĕнтерӳшĕн! Çакă вăл — çĕршывăн паянхи сасси, унăн паянхи лозунгĕ. Тух уя, ăна всĕ трактор танк пек кĕрленинче илтетĕн.

— Пĕлтĕр пахчаран 60 пин тенкĕ тупăш илтĕмĕр, — тет «Волга» колхозри пахчаçă Петр Степенович, Кăçалхи тупăша вăл укçапа виçмест. Вăл халь помидорсемпе арбузсем пухма хатĕрленет. Вĕсем нумай. Вĕсем те фронтшăн!

И. МОИС.

Англипе Америка кăларнă декларацийĕ—Германире шикленсе ӳкнĕ

ЛОЗАННА, августăн 22-мĕш. Рузвельтпа Черчилль алă пусса кăларнă Англипе Америкăн декларацийĕ—Гитлера хирĕç пĕтĕм тĕнчери халăхсен фончĕ сирĕпленнине кăтартакан декларацине Германири политикăллă сăнсене шиклентерсе ӳкернĕ. Германин суякан пичечĕ те хăй хăраса ӳкнине пытарса тăма пултараймасть. Гитлеровецсем декларацин пĕтĕм текстне пичетлеме хăяйман, декларацири уйрăм вырăнсене тата уйрăм сăмахсене хирĕç сăрнисĕр тата пуринчен ытларах Рузвельтпа Черчилле йĕркесĕр вăрçнисĕр пуçне урăх нимĕн те халаймăн.

Нацистсен тиранине пĕтĕмпех пĕтернĕ хыççăн çĕршывсене хăйсен территоринче хăрамасăр пурăнма май паракан мирлĕ пурнăç тăвасси çинчен калакан декларацин пункчĕ фашистсен çиллине уйрăмах ӳстерет.

Германи ютçĕршыв ĕçĕсен министерствин официозĕ «Дейче дипломатиш политише корреспонденц» хаçат Англипе Америка декларацинче мĕн çĕнтеричченех пĕрле сывăх пуласси çинчен каланипе кăмăлсăр пулнине палăртать. Рузвельтпа Черчилль Сталин патне янă посланире гитлеризма хирĕç пыракан пĕтĕмĕшлĕ вăрçăра вырăссем активлă участниксем пулса, фашистсем тапăннине хирĕç питĕ хăватлă отпор панă тени официоза уйрăмах шăртлантарать.

Сĕтĕрĕнчĕк Геббельс та Германи фашисчĕсене лăплантармалли сăмахсем тупайман. Вăл статья пичетлесе кăларнă, çав статьяна Рузвельтпа Черчилле карма çăварла вăрçса кăланă пĕр шухăшсăр сăмахсемпе тултарнă. Геббельспа унăн шайккин статьисенче нимĕнле аргументсемсĕр вăрçса сырнин йĕрĕнчĕк тонĕ Германи хаçачĕсен нумай вулаканĕсене тарăхтарса янă. Çакă питех те характерлă пулса тăрать: Турцин «Ени сабах» ятлă хаçачĕн редакторĕ Джахид Ялчин, гитлеровецсен майлă пулса хăйĕн хаçатĕнче пĕрре çеç мар çырса пынăскер, декларацине хирĕç Германия ответленнине питех те килĕшменни çинчен калать, çав ответа вăл кулăшла тата ăнентермелле мар, тесе шутлать. Вăл çапла çырать: «Рузвельтăн «сĕмсĕрлĕхĕ» çинчен калаçнисем Германин шухăшне хӳтлекен сăлтав пулса тăраймаççĕ... Англи те, Америка та правленни формисене туса хурас ыйтура нацисен ирĕк-кăмăлĕн принципĕсене хӳтленĕ вăхăтра Берлинри çурма-официаллă источник Европа малашлăхне Германи хĕçпăшалĕн вăйĕсенчен килет,—тесе калать. Паллах ĕнтĕ, Германи тезисне хӳтлекенсем тĕрĕслĕх, нацисен ирĕклĕхĕпе прависем çинчен халаçма пултараймаççĕ».

Юлашкинчен автор: нимĕçсем хăйсен ответчĕ пирки «япăх ĕçленĕ», тесе çырать. (ТАСС).

Рузвельт конгреса янă послани

НЬЮ-ЙОРК, августăн 22-мĕш. Англин премьер-министрĕпе Черчилльпе тĕл пулса калаçнă май, Рузвельт конгреса послани янă. Рузвельт çак посланире çапла калана: «Пĕр эрне каярах эпĕ Англи премьер-министрĕпе Черчилльпе тинĕс çинче темиçе канашлу туса ирттертĕм. Англи, Америка тата Канада карапĕсене тата вĕсем çинчи командăсене хăрушлăх умне кăларса тăратас мар тенĕ шухăшпа çак пулса иртнĕ канашлусем çинчен махарах тухса калама майсем пулмарĕç. Канашлусем пулса иртнĕ хыççăн Англи премьер-министрĕ тата США президенчĕ ячĕпе декларацин пичетлесе кăларнă. Конгреса пĕлтерме тата протокол валли эпĕ çав декларацине ярса паратăп».

Августăн 14-мĕшĕнче кăларнă декларацин 8 пунктне кĕскен пĕлтернĕ хыççăн, Рузвельт малалла çапла калать: «Унченех конгресс тата президент, хĕçпăшала кивçен е арендăпа парасси çинчен кăларнă закон тăрăх, диктаторла çĕршывсене хирĕç хĕвелтухăçĕнче тата хĕвеланăçĕнче кĕрешекен демократиллĕ çĕршывсене Америкăран пулăшу парса тăрас политикăна тытса пыма йышăннăччĕ. Англипе США-н çар тата флот представителĕсем хушшинче пулса иртнĕ калаçусем тата США президенчĕ Англи премьер-министрĕпе канашлу туса ирттерни çак пулăшăва ӳстерме тата сарса пыма кирлине кăтартса пачĕç. Кунсăр пуçне, Англи премьер-министрĕпе эпĕ Совет Союзĕн представителĕсемпе канашлу ирттересси çинчен калаçса татăлтăмăр. Хальхи вăхăтра тĕнчере тĕп агрессор пулса тăракан Германия тапăннине хирĕç çапăçма Совет Союзне пулăшса пырас тĕлĕшпе тăракан ыйтăва çав канашлура сӳтсе-явмалла.

Деклараци принципĕсем хальхи вăхăтра пирĕн паянхи цивилизацин тĕллевĕшĕн юрăхлă та тивĕçлĕ пулса тăраççĕ.

Çак принципсене çавтери уçăн та татăклăн каласа пани, декларацин çак пайне кирек мĕнле хирĕç тăни те нацизмпа компромисс тума хатĕр тăнине е нацизмпа мир тума—хăй пăхăнтарнă нумай халăхсем çинче пуçпулса тăма майсем паракан мир тума килĕшме хатĕр тăнине пĕлтерет. Кун пек мир туни нацизмшăн паха парне пулса тăрĕччĕ, нацизма иккĕмĕш вăрçа хатĕрленме хĕçпăшал тĕлĕшпе сывлăм çавăрса илсе, Европăпа Ази хыççăн хăй пуçпулса тăрассине Америка полушарийĕ çине сарассишĕн вăрçа тухма май парăччĕ.

Нацистла правительство сăмахĕна каланине те, сырнине те нимĕн чухлĕ те ĕнемне кирлĕ марри çинчен тепĕр хут калама кирлех те мар пулĕ. Пичетлесе кăларнă декларацире тĕн ирĕклĕхĕ, сăмах ирĕклĕхĕ пĕтĕм тĕнчешĕн кирлине кăтартнă, ăна та ĕнентерсе пама кирлех мар. Кăтартнă принципсем çинче тунă тĕнчери нимле общество та çак ирĕклĕхсемсĕр пурăнма пултараймасть. Вăл ирĕклĕхсем идеалсен пайĕсем пулса тăраççĕ,—эпир çав идеалсемшĕн кĕрешетпĕр».

(ТАСС).

Варшава фашистсен влаçĕн айĕнче

Турци хаçачĕсем Анатолийски агентствăн Берлинри корреспонденчĕ пĕлтернине пичетленĕ. Корреспондент нумай пулмасть Варшавăна кайса килнĕ. Пĕлтерӳре çапла калана: «Хытă çĕмĕрнĕ хыççăн хула вăрçă лагерĕ пек курăнать. Продовольстви тĕлĕшĕнчен калама çук йывăр. Продуктсем çавтери хаклă. Халăх оккупантсемпе кирек мĕнле сывăх пулассинчен те пăрăнать тата Сикорский правительствишĕн шанчăклăн тăрать. Поляксем, нимĕç пропагандине вăйлăн хирĕçлесе, хăйсен пропагандине туса пыраççĕ».

Корреспондент малалла çапла çырать: «Эпĕ 300 еврея тытса хупнă геттора пултăм. Вăл—хула варринчи пысăк квартал, йĕриташра йĕплĕ пралуксем карса çавăрнă. Унта кĕмелли алăка нимĕç салтакĕсем сыхласа тăраççĕ. Еврейсем уйрăм паллăллă повязкăсем çыхнă. Гетто тулашĕнче ĕçлесен кăна, вĕсем гетторан тухса кайма пултараççĕ. Геттора пурнăç çавтери япăх. Çынсене тăрантассипе шăхас ĕçе пачах йĕркелемен. Çынсем урамсенче пурăнаççĕ. Кашни кунах унта 300 яхăн çын вилет. (ТАСС).

Румынири лару-тăру çинчен Англи корреспонденчĕ мĕн çырать

ЛОНДОН, августăн 22-мĕш. «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат çапла пĕлтерет: Румынирен килнĕ çынсем Румынире лару-тăру питех те йывăрланса çитни çинчен каласа параççĕ. Румыни халăхĕ хуйха ӳкнĕ. Антонеску пуçласа янă авантюра çĕршыва вилĕм патне илсе пынине пурте сиссе тараççĕ. Продовольстви проблеми кулленех йывăрланса пырать, продуктсем çитмеççĕ, пурнăç çавтери хаклаланнă. Çĕршывра спекуляци хытă сарăлнă. Унччен те высăл-тутăллă пурăннă Румыни халăхĕн пурнăçне вăрçă татах та начарлатнă. Антонеску каланă «прогулка» Румынишĕн вилĕмле пулса тăчĕ. Пĕлсе тăракан çынсен даннăйĕсем тăрах, Румынин хăйĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен малтанхи составĕнчен 40 процентне çухатнă та ĕнтĕ. (ТАСС).

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

ЛОНДОН, августăн 22-мĕш. Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: августăн 22-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Германин темиçе самолечĕ Англи çинче вĕçнĕ. Противник авиацийĕн активлăхĕ çĕршывăн хĕвелтухăç районĕсенче çеç пулнă, территори ăшне шала пĕр самолет та кĕреймен. Бомбăсем пăрахни çинчен сведенисем çук. (ТАСС).

Совет авиацийĕ Румыни нефтепромыслисем çине тапăнни çинчен Америка корреспонденчĕ мĕн калать

НЬЮ-ЙОРК, августăн 22-мĕш. Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Констанцăран килнĕ çынсем каласа панă тăрăх, совет авиацийĕ вĕçсе пырса тапăнни Румыни нефтепромыслисене тата нефтепроводсене питех те пысăк сиенсем кӳнĕ. Совет самолечĕсем Чеховоды кĕперĕ çине бомбăсем пăрахнă чухне питех те кирлĕ нефтепроводсене икĕ вырăнта çĕмĕрнĕ тата пушарсем кăларнă. Пушарсем нумай сехетех тăсăлнă. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКĂРИ УЙХИРСЕНЧЕ

Шăхасан районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз ырăша районра пуринчен малтан вырса пĕтернĕ. УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): звеньевой Зинаида Яковлева, звеновод Павел Изотов, колхоз председателĕ Николай Николаев тата бригадир Василий Клементьев юлташсем ĕç итогĕсене тăваççĕ.

Е. Цыганов фотоӳкерчĕкĕ.

Пысăк пахалăхлă вăрлăхсемпе акаççĕ

ЕЛЧЕК, августăн 23-мĕш. (Телефон тăрăх). Кĕрхи тырăсене вырса пĕтернĕ хыççăнах çурхи культурăсене вырма тытăнтăмăр. Паянхи куна мĕнпурĕ 2.600 гектар вырса пуçтарнă, пăрçа йышши культурăсене 445 гектар çинчен çулса кĕнĕ. Вырса пуçтарнă тырпула капана хывас ĕç пырать. «Марс» колхозра авăн çапассине лайăх организацилеме. Кунта двигатель ĕçлет, кунне 800 пăт тырă çапаççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра та авăн çапас ĕçе механизацилеме.

Августăн 25-мĕшне кĕрхи тырăсене акса пĕтеретпĕр, халĕ 14 колхоз акса пĕтернĕ. Акма хатĕрленĕ вăрлăхсен пахалăхĕ лайăх. Вăрлăх участокĕсем çине акмалли вăрлăха пĕтĕмпех протравить туса акаççĕ.

П. ТИТОВ.
Райçĕрĕç пайĕн агрономĕ.

Государствăна таса тырă параççĕ

ÇЕРПУ. Çип çапнă пек тӳрĕ выртакан çулсем тăрăх тулли лавсем иртсе пыраççĕ. Ку лавсем колхозсен ăнса пулнă таса тыррине государствăна пама каяççĕ. «Правда» колхоз 1941 çулшăн государствăна ырăш парса татрĕç. Çавăн пекех, «Ударник», «Луч», «1905 год» тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсем те çурхи культурăсене парса татрĕç. «Социалистический путь» колхозран çĕнĕ тырă лесце пачĕç. Вĕсен государствăна памалли тырă пултра тата таса. Пĕр çӳп-çап та сух.

Августăн 19-мĕш тĕлне районĕпе 10,620 гектар вырса пуçтарнă. 30 колхоз кĕрхи тырăсене вырса пĕтернĕ.

Колхозсем ытти ĕçсене те кая хăвармаççĕ. Халĕ 52 колхозра кĕлте кӳреççĕ. 41 колхозра авăн çапма пуçланă. Кĕрхи тырăсем акма пур колхозсем те тухнă. Çак куна 5 пин гектар ытла акнă. Чылай колхозсенче çурхи тырăсене пуçтарса кĕме тухнă.

Г. ПЕТРОВ.

Çĕнĕ тырă

Кунта Шупашкар, Çĕрпӳ районĕсенчен килнĕ колхозниксемпе колхозницăсем темĕн чухлех. Государствăна çĕнĕ тырă паракансем пĕр-пĕринпе шăкăлтатса калаçаççĕ. Паянхи кунри çĕнĕ обстановка çинчен, тырпул тухăçлăхĕ, çапăçури эпизодсем, çĕнĕ çăкăр пĕçерсе çини — пурте вĕсен калаçăвĕнче. Хальхи вăхăт, колхоз хресченĕсене нумай енлĕ, сисĕмлĕ, паттăр пулма хушать. Çав хушăрах вĕсем кăçал пухса илежен çĕнĕ тырă çинчен ытларах калаçаççĕ, колхозсем мĕн чухлĕ тырă илнипе паллашаççĕ.

* * *

— Сирĕн колхоз ячĕ?
— «Хĕрлĕ Çар».
— Район?
— Шупашкар.
— Аван ĕçленĕ эсир. Сорчĕ — лайăх. Нӳрлĕхĕ — лайăх. Тĕслĕхĕ — тата та лайăх. Пĕр çӳп-çап та тупаймарăм, — тет тырă халат тăхăннă кĕрарăм, чӳрече витĕр хут татки тытгарса.

Çакăн пек ĕçленĕ кăçал республикăри нумай колхозсем. Тырă таса, шултра та типĕ. Колхозсен чыслă ĕçĕн, çине тăрса тăрăшнин результачĕ пуян тырпул пухса кĕртес ăнăçлăх килет.

Колхоз председателĕ бригадирсен, звеньевойсен ĕçĕсене тăтăшах тĕрĕслесе тăрать, мĕнле ĕçлеме тата колхозниксене ĕçре мĕнле ертсе пыма кирлине кăтартса парать, вĕсемпе вăл ялан тĕл пулса калаçать.

Кăçалăх хĕрринче агитатор-вулавçăсен сасси илтĕнет. Вĕсем Иван Карпыч леçсе панă хаçатсем çинчи çĕнĕ хыпарсене колхозниксене вуласа пама тытăннă. Колхозниксене çуринчен ытла Совет Информаци Бюровĕн сводкисем тата красноармеецсен паттăр çапăçăвĕсем çинчен калакан боевой эпизодсем интереслентереççĕ. Çавăнпа вĕсем хаçатсем вулама тытăнсанах, вулавçăсенчен тӳрех ыйтаççĕ:

— Ну-ка, малтан Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернисене вулăр-ха, Хĕрлĕ Çар халĕ тата мĕнле ситĕнӳсем тунă?

Колхозра пурĕ 15 вулавçă. Вĕсем кашни звенорах пур. Кану вăхăчĕсенче вĕсем часах хаçатсем вулама тытăнаççĕ.

Кăнтăрлахи кану вăхăчĕ нумай хушă тăсăлмасть. Колхозниксем часах каçалăк хĕрне тăрса тырă вырма пуçлаççĕ. Вĕсем пурте, пĕр сын пек пулса, çапла калаççĕ:

— Часрах вырса пуçтарас, ăна тăкаланма парас мар. Тырпула тирпейлĕн пухса кĕртни Германи фашизмне çĕмĕрсе тăкма пулăшать.

Каçхине бригадирсемпе звеньевойсем колхоз правлени канцелярине пухăнаççĕ. Вĕсем унта пĕр кунхи ĕçĕн итогне тăваççĕ, уйрăм стахановецсене палăртаççĕ, ĕçшĕн хушса тӳлеççĕ.

Пĕрремĕш бригадăри пĕрремĕш звено звеновочĕ Сергей Волосов хăй звенинчи стахановецсем çинчен каласа парать:

— Христина Пахомова 550 кĕлте вырса сыхнă.

— Анна Романова—505 кĕлте.

Тата ыттисем те. Вĕсене кашнинех ĕç нормине тултарса ĕçленĕшĕн хушса ĕçкунĕ параççĕ.

* * *

Хураварти «Заветы Ильича» колхоз (Элĕк р.) ырăша план тăрăх 5 кун хушшинче вырса пуçтарма палăртнă. Вăл ăна тăватă кун çурăра вырса пĕтерчĕ. Халĕ вăл кĕлтесем турттарать. Государствăна тырă тăратма авăн çапать. Кĕçех çуртри вырма тухать.

И. МОСЕЕВ.

КОЛХОЗСЕНЧЕН ПĔЛТЕРЕÇÇĔ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, августăн 23-мĕш. (Телефон тăрăх). Пур колхозсем те кĕрхи тырăсене вырса пĕтернĕ. Колхозсенче халь вырнă тырпула капана хывас тата авăн çапас ĕçсем пыраççĕ. Çак куна районĕпе 1.508 гектар çинчи тырпула капана хывнă, 1.485 гектар çапнă. Колхозсенче 23 молотилка авăн çапать, вĕсем кунне 20-шер сехет ĕçлеççĕ. Единоличник хуçалăхĕсем те авăн çапма пуçланă, вĕсем государствăна 20 центнер тырă лесце пачĕç. Уйхир ĕçĕсем пуçланнăранпа чылай хуçалăхсем колхоза кĕчĕç. Урмай ялĕнче 7 хуçалăх колхоза кĕнĕ.

Кĕрхи тырăсене çуррине акса пĕтернĕ. Икĕ колхозра кĕртыррисене хăреслĕ майпа акаççĕ.

П. КАЗАКОВ.
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

* * *

КАНАШ. Районри пур колхозсенче те вырнă тырпула капана хывас тата авăн çапас ĕçсем сарăлса пыраççĕ. Яванкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхозра авăн çапас ĕçе лайăх организацилеме. Молотилкăсем кунне 20-шер сехет ĕçлеççĕ. Колхоз чи малтанхи тара тырра 187 центнер государствăна лесце пачĕ.

Кĕрхи тырăсем акас ĕç те ăнăçлăн пырать. Районĕпе халь 1.408 гектар акнă. Юманзар колхозĕнче сеялкăпа акмалли нормăна ытлашшипех тултараççĕ.

А. ВОРОБЬЕВ.
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

* * *

СОВЕТСКОЕ. Тури Ачакри «Крестьянская газета» колхоз кĕрхи тырăсене планпа пăхнинчен пĕр кун маларах вырса пĕтерчĕ. Кĕлте кĕртме уйăрнă колхозниксем вырнă тырпула итем çине кĕртсе капана хываççĕ. Кĕрхи тырăсене пĕтĕмпех машинăпа хĕреслĕ майпа акаççĕ. Кĕраки тумалли çĕр лаптăкне лайăх пăхса тăнă, унта 4 пин лав тислĕк кăларнă. Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене те срокченех тултарса пырать. 1941 çулшăн государствăна 230 центнер тырă панă. Çавăн пекех аш-какай, сĕт-çу, çăм, çăмарта та парса татнă.

Н. МИХЕЕВ.

* * *

ÇЕРПУ, августăн 23-мĕш. (Телефон тăрăх). Паянхи куна районĕпе 8.700 гектар кĕрхи тырăсем акнă. «Клим Ворошилов», «Молот», «Красный флот», «Красная Чувашия» колхозсем акса пĕтерчĕç. Ыран 65 колхоз кĕрхи тырăсене акса пĕтерет. Пур колхозсенче те кĕрхи тырăсене пысăк пахалăхпа акаççĕ. Маларах акнă вăрлăхсем тикĕс шăтса тухрĕç.

Колхозсенче ĕçе тĕрĕс организацилени пур ĕçсене те вăхăтра туса пыма май пачĕ. Паянхи куна мĕнпурĕ 4.950 гектар çурхи тырăсем вырса пуçтарнă.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Янчкасси колхозĕ кĕрхи культурăсене пĕтĕмпех вырса пуçтарчĕ. Халĕ 16 гектар çуртри вырнă. Ĕçлеме пултаракан пур колхозниксем те уйра, тырă вырнă çĕрте ĕçлеççĕ. Чылай колхозниксем куллен-кăн нормăна 200–300 процент тултараççĕ. Государствăна 60 центнер ытла çĕнĕ тырă лесце панă. Колхозра пур ĕçсене те вăхăтра туса пыраççĕ. Кĕрхи тырăсене акса пĕтереççĕ. Общественнăй пурлăха вуткăвартан тата диверсантсенчен хытă сыхлаççĕ.

Н. ВИНОГРАДОВ.

* * *

ПĔПРЕÇ. Чылай колхозсем кĕрхи тырăсене вырса пĕтерсе çурхи культурăсене пуçтарса кĕме тытăнчĕç. Чăрăшкасси колхозĕ халь авăн çапать. Кĕрхи тырăсене пухса кĕнĕ çĕрте жнейкăпа ĕçлекен Тимофеевпа Яковлев юлташсем кунне 7-шер гектар вырчĕç.

Вырнă тырпула капана хывас ĕç хĕрӳллĕ пырать. Колхозсем лайăх çанталăкпа усă курса кĕлтесене хăвăртрах капана хывса лартма васкаса ĕçлеççĕ. Августăн 20-мĕшне районĕпе 398 гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă.

Дм. МИХАЙЛОВ

—o—

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1941 çулти августăн 23-мĕшĕнче кăларнă Указпа, Григорий Михайлович **Гусев** юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă пирки, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕн ĕçĕнчен хăтарнă.

Лекци

Августăн 26-мĕшĕнче ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче **«Демократиллĕ государствăсенчи халăхсен Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳри пĕрлĕх фончĕ»** темăпа лекци пулать. Лектор—**Сафрошкин** юлташ.

Лекци каçхине 8 сехетре пуçланать. Пурте ирĕклĕнех кĕме пултараççĕ.

Парткабинет.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5098.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии 58 84 п. л.